24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 6 ЫТЛАРИКУН 4(6029) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Тинĕс-Çар Флочĕн высший начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

Тинĕс-Çар Флочĕн высший начальство составĕнчи аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

ÇЫРАНРИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

Митрофан Иванович **Москаленкона**

КОНТР-АДМИРАЛ ЗВАНИНЕ

1. Николай Ефремович **Басистыя**
2. Павел Иванович **Болтунова**
3. Николай Игнатьевич **Виноградова**
4. Василий Иванович **Платонова**

ÇЫРАНРИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

1. Василий Михайлович **Корабулькина**
2. Иван Афанасьевич **Кустова**
3. Степан Васильевич **Лишенкова**

АВИАЦИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Алексей Матвеевич **Миронова**

ИНТЕНДАНТ СЛУЖБИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

1. Александр Иванович **Вилесова**
2. Яков Яковлевич **Яковлева.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти январĕн 3-мĕш.

Польша республикин президенчĕ Владислав Рачкевич СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ патне Çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса янă телеграмма

Иртнĕ çулталăк Польша республикипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ пĕр-пĕрин хушшинче ырă кăмăллăн килĕшсе таталмалли çул пулса вĕçленчĕ, çак килĕшӳ пирĕн хамăрăн ирсĕр тăшмана хирĕç пĕрлешсе кĕрешмелли шанăç çинче никĕсленсе тăрать. Çĕнĕ çул пуçланнă майпа эпĕ пирĕн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси татах та çирĕпленсе пырассине тата çак килĕштерӳ пире хамăр союзниксемпе пĕрле туса пыракан кĕрешӳ ĕçне ăнăçлăн вĕçлесе çитерме пулăшассине шанни çинчен калатăп. Çакăнпа пĕрлех, господин председатель, эпĕ Сирĕн Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи халăхсене пĕтĕм чĕререн телей суннине тата унăн геройла çарĕсене çитĕнӳсем тума суннине йышăнма ыйтатăп.

Владислав РАЧКЕВИЧ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Польша республикин президенчĕ Владислав Рачкевич патне Çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса янă телеграмма

Çĕнĕ çул ячĕпе эпĕ Сире, господин президент, хам сунакан шухăшсене те тата пĕр иккеленмесĕр ĕненсе тăнисене те пĕлтерсе, çакна каласшăн: хальхи вăхăтра ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пурте ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешме пĕрлешнĕ. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Польша республикин халăхĕсем, çав тăшмана çапса аркатса, хăйсен историллĕ задачисене пурнăçа кĕртĕç.

Польша халăхĕшĕн халĕ ĕнтĕ чи йывăр пурнăç тапхăрĕ иртсе кайни çинчен, Польша государствишĕн хăйĕн халăхĕ çĕнĕрен çуралса ура çине тăрас вăхăт инçе мар юлнине ĕненни çинчен шантарса калама мана ирĕк парăр.

М. КАЛИНИН.

В. М. Молотов юлташ Норвеги посланникне г-н Р. О. Анварда йышăнни

Январĕн 3-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ Норвегин ССР Союзĕнчи çĕнĕ чрезвычайнăй посланникне тата полномочнăй министрне г-н **Р. О. Анварда йышăннă.**

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйсăрлатмалла мар

Пирĕн тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн, пирĕн пуласлăхшăн пыракан отечественнăй вăрçăн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланчĕ. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем, активлă оборонăран наступленине куçса, тăшмана каялла хăваласа пыма тытăнчĕç. Фронтăн чылай участокĕсенче Хĕрлĕ Çар юлашки кунсенче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Хула хыççăн хулана, ял хыççăн яла Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларать, пиншер ĕççыннисене этемле мар пусмăрлăхран, асаплăхран çăлса хăварать. Германи империалисчĕсен, юнлă Гитлерăн ирсĕр бандисене çĕмĕрсе пĕтерсе тăкмалла, вĕсене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтермелле, тесе Сталин юлташ лартнă задачăна Хĕрлĕ Çар чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Хуласем, ялсем йышăнса илни çинчен, нумай трофейăсем тытса илни çинчен Совет Информаци Бюровĕ кашни кунах çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет. Çак савăнăçлă хыпарсем тылра ĕçлекен ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ.

Пирĕн тыл çирĕп те тĕреклĕ. Вăл фронт ыйтăвĕсене пурне те тивĕçтерсе пырса, тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать. Кашни кунах фронт валли ытларах та ытларах самолетсем, танксем тата ытти хĕçпăшалсем парса тăрать. Пирĕн колхозлă хресченсенчен Хĕрлĕ Çар ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата ытти çимĕçсем илсе тăрать.

Хĕрлĕ Çара ĕççыннисем ĕçлĕн те активлăн пулăшса пынине кăтартакан нумай тĕслĕхсенчен пĕри вăл — боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç пулса тăрать. Çак паха ĕçе пирĕн республикăри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, хастарлăн хутшăнчĕç. Вицĕ уйăх хушшинче республикăра 60 пин ытла тир пухнă, вĕсенчен 6 пин кĕрĕк пиншак çĕлетсе панă, 35 пин килограмм çăм пухса 15 пин мăшăр ытла çăматă йăваласа панă, 15.200 мăшăр çăм алшишш, 12 пин мăшăр чăлха, 12 пин мулаххай тата ытти тĕрлĕ япаласем нумай пухса панă. Çакăнта ĕнтĕ ĕççыннисен патриотизмла аслă туйăмĕ вăйлăн палăрса тăрать.

Анчах вăрçă хăрушлăхĕ чакман-ха. Тăшман пĕтĕм вăйне пухса вăрçăра ӳсĕмсем тума хăтланса пăхĕ. Çавăнпа та пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пырас пулать. Ăшă тумтирсем пухас хăвăртлăхсене пĕр самантлăха та чакарма юрамасть, пачах урăхла, вăл ĕçе вăйлатнăçемĕн вăйлатса пымалла.

Апла пулин те çак ĕç юлашки кунсенче кăштах сӳрĕкленни палăрать. Хăшпĕр юлташсем, тунă ӳсĕмсемпе лăпланса ларса, ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеме пăрахрĕç. Районсенчи, предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи комиссисем те хăйсен ĕçне чылай вăйсăрлатрĕç. Çавна пула хăшпĕр районсенче пухнă япаласен хисепĕ юлашки вăхăтра пĕчĕккĕн çеç ӳссе пырать.

Çак йăнăша халех тӳрлетес пулать. Ăшă тумтирсем пухас ĕçе хакламасăр тăни пулмалла мар. Килес кунсенче предприятисемпе колхозсенче ăшă тумтирсем пухас ĕç мĕнле пыни çинчен комиссисен отчечĕсене итлесе сӳтсе-явмалла. Çав пухусенче кам мĕнле ăшă япала парса пулăшма пултарассине, комисси ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсене е лайăх опытсене палăртса, ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатма конкретнăй мероприятисем палăртса хăвармалла.

Хĕрлĕ Çар ретне тăнă пирĕн аттесем, пиччесем, упăшкасем, тăвансем, хĕллехи сивĕсенчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Гитлерăн пыйтлă та çĕтĕк-çатăк бандичĕсене пĕтерсе тăкма çăмăлрах пултăр тесе, пирĕн Хĕрлĕ Çарти хамăрăн тăвансене ăшă тумлантарас пулать. Çавăнпа та ăшă тумтирсем пухас ĕçе кашни ĕççыннинех хутшăнтарассишĕн кĕрешмелле. Партипе совет, комсомол, профсоюз активĕсен ĕçре хăйсен пример кăтартса пымалла, ытти ĕççыннисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатса ямалла.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе кашни ĕççынниех хутшăнтăр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 3-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 2-мĕшĕнче нимĕçсенне 5 самолет пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 3-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Январĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем противникăн 4 бронемашинине, 39 автомашинине тата нимĕçсен пехотипе çар грузне турттарса пыракан 184 лавне, 5 полевой орудине, чугун çул çинчи 6 состава тата 3 ангара пĕтерсе тăкнă, противник пехотин 2 полкне çити тата нимĕç кавалерисчĕсен пĕр взводне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 5 пункта йышăнса илнĕ тата противникăнне 5 пулемет, 7 автомат, 2 оруди тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем, малалла наступлени туса пырса, противникăнне 8 оруди, 13 миномет, 34 пулемет, 385 винтовка, 10.000 патрон, 400 мина, 2 радиостанци тытса илнĕ тата 150 нимĕçе ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть, ăнăçлă çапăçусем туса пырса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн подразделени, тĕплĕн шухăшласа хунă операцие туса, противника пысăк поражени кӳнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕннисем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 2 оруди, 10 пулемет, 2 миномет, винтовкăсемпе автоматсем, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Азов тинĕсĕн таврашĕнчи партизансем нимĕç оккупанчĕсене пĕр хăрамасăр пыра-пыра çапаççĕ. К. юлташ командир пулса тăракан отрядри боецсем нимĕçсен боеприпассем тиенĕ 14 пысăк моторнăй лодкине пĕтерсе тăкнă. Г. юлташăн отрядĕнчи боецсем фашистсен сторожевой катерне взрыв туса сирпĕнтернĕ, боеприпассем тиенĕ 14 лавран тăракан обоза тата 2 грузовой автомашинăна аркатса тăкнă. Çак çапăçусем вăхăтĕнче 30 нимĕç салтакне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. П. тата Г. командирсен пĕрле пĕрлештернĕ отрячĕсенчи боецсем пысăк çитĕнӳсем тунă. Разведкăна пĕлсе организацилесе, патриотсем нимĕçсен танксемпе снарядсем тиенĕ поезчĕ хăш вырăнтан тата хăш вăхăтра тапранса каясси çинчен пĕлнĕ. Поезда взрыв туса сирпĕнтерсе, патриотсем снарядсем тиенĕ 5 вагона тата танксене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Испанин «Голубая дивизия» текен дивизийĕн 269-мĕш пехотнăй полкĕнчи 1-мĕш батальонран тыткăна лекнĕ салтак Эусебио Бельосидьо допросра çапла каланă: «Пирĕн «Голубая дивизия» текен дивизире 8.000 çын пĕтнĕ те ĕнтĕ. Чаçсенче тăм илсе янă салтаксем çĕршерĕн шутланаççĕ. Нумайĕшĕнне вĕсенне тăм илсе янă пирки урисене касса татнă. Полковник Эспарсо командир пулса ертсе пыракан 269-мĕш полкра çухатусем уйрăмах пысăк. Салтаксем полковник çинчен çапла калаççĕ: вăл Гитлер умĕнче чапа тухасшăн, тессĕ; ăна çынвĕлерен тесе чĕнеççĕ».

* * *

Ленинград облаçĕнчи халь нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Большие Вязищи ялĕнче пурăнакан çынсем çапла калаççĕ: пирĕн чаçсем хăватлăн пыра-пыра çапнипе ялтан чакнă чухне нимĕçсен отрячĕ 13—14 çулти арçын ачасемпе хĕрачасене 15 ачана персе пăрахнă.

* * *

Çапăçу хирĕнче вилнĕ çынсене çаратасси Финлянди çарĕнче финн салтакĕсен обязанноçне кĕрет, çакăн пек çаратнине унта ырласа хĕтĕртсе пыраççĕ. Финсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕн штабĕ кăларнă 511-мĕш №-лĕ секретлă инструкцире çапла каланă: «Кирек мĕнле обстоятельство пулсан та, обстановка май парсассăн противникăн вилнĕ салтакĕсем çийĕнчен обмундированипе снаряженине пĕтĕмпех хывса илмелле. Питĕ кирлех пулсан, çак ĕçе тума военнопленнăйсене те явăстармалла (çакна ăна Карельски армин штабĕ телеграфпа панă распоряжени тăрăх тунă)».

* * *

Омск облаçĕнчи колхозниксем, Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем ытларах та ытларах параççĕ. Исиль-Куль районĕнчи «Новая жизнь» колхоз, поставка тăрăх тырă памалли плана тултарнă хыççăн, государствăна çĕнĕрен 27 пин пăт тырă сутнă тата ССР Союз оборонин фондне 3 пин пăт хывнă. Полтавски районри Октябрьти революци ячĕпе çул тултарнă ятпа тăракан ялхуçалăх артелĕ государствăна 18 пин пăт тырă сутнă тата çĕршыв оборони фондне 6 пин пăт панă.

Январĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 4 пунктран нимĕçсене кăларса сирпĕтнĕ тата нимĕçсенне пĕр танк, 8 оруди, 36 автомашина, 17 пулемет, боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен 31-мĕш пехотнăй дивизийĕн 12-мĕш полкĕн штабне тытса илнĕ, тăшманăнне 3 грузовой машина, пĕр çăмăл машина тата штабри документсемпе пурлăхсене тытса илнĕ.

* * *

Т. хула çывăхĕнче тăшманăн аэродромĕ çинче противникăн 10 самолечĕ тăнине пирĕн разведка йĕрлесе тупнă. Январĕн 2-мĕшĕнче ирхине Картузов капитан ертсе пыракан истребительсен группи тăшманăн çав аэродромĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса нимĕçсен 6 самолетне пĕтерсе тăкнă, ытти самолечĕсене хытах сиенленĕ.

* * *

Лейтенант Федоренко ертсе пыракан танкăн экипажĕ противника хирĕç пынă пĕр çапăçура нимĕçсен çĕрпе йывăçран çирĕплетсе тунă 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 25 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр танк экипажĕн оруди командирĕ Мостовицкий юлташ артиллерирен персе противникăн пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ икĕ районĕнче кĕрешекен «Грознăй» «Боевой», «Храбрый» тата «За родину» ятлă партизансен отрячĕсем фашистсене татти-сыптисĕр пыра-пыра çапаççĕ.

Юлашки вăхăт хушшинче кăна партизансем тăшманăн артиллери складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн разведка тăвакан самолетне экипажĕ-мĕнĕпех пĕтерсе тăкнă, 8 грузовой автомашинăна, 4 çăмăл автомашинăна, 6 офицерпа 10 салтак ларса пыракан автобуза тата 3 пысăк фургона пĕтерсе тăкнă. Мухтавлă совет патриочĕсем тĕрлĕ вырăнсенче шоссе çулĕсене 8 километр тăршшĕ, чугунçул линине 300 метр тăршшĕ çĕмĕрсе пĕтернĕ, 4 кĕпере тата уйхирте çыхăну тытмалли нумай линисене пĕтерсе тăкнă, кабельсене 1.700 метр тăршшĕ касса илнĕ. Нимĕçсен çарĕ вырнаçнă ялсем çине партизансен отрячĕсем 5 хутчен пырса тапăннă, фашистсен икĕ карательнăй отрядне çапса аркатнă. Партизансем мĕнпурĕ нимĕçсен 297 салтакне, 28 офицерне тата фашистсен шпионĕсене темиçе çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Харьков облаçĕнчи Балаклей районĕнчи Андреевка ялĕнче гитлерла бандитсем çав ялти 40 çынна, çав шутрах хĕрарăмсемпе темиçе ачана, персе вĕлернĕ. Киев облаçĕнчи Андрюшино ялĕнче нимĕçсем çав ялти арçынсене 14 çултан пуçласа 60 çула çитиччен хисене пурне те арестлесе таçта паллă мар çĕрелле хăваласа илсе кайнă.

* * *

Продуктсем парас нормăна Румынире татах та нумай чакарнă. Чылай хуласенче пурăнакансем çăкăр, пахча-çимĕç пачах та илеймеççĕ, аш-какай çинчен каламалли те çук. Румынири Плоэшти, Фаурей тата Бузэу хулисенче декабрь уйăхĕнче выçă çынсем демонстраци туса ирттернĕ.

* * *

Бергенран кăнтăрарах (Норвегия) нимĕçсен боеприпассем усракан складне тата инçете пемелли орудисен батарейине сирпĕнтерсе янă. Çавăнта нимĕçсен артиллерирен перекен тата складсене хуралланакан çыннисем пĕтнĕ.

* * *

Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсене тухса кайнă арçынсен вырăнĕнче совет патриоткисем ăнăçлăн ĕçлеççĕ. «Сокольный» (Алтай крайĕ) рудникĕнче Давыдченко юлташ бурильщик профессине вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл кашни сменăрах икшер норма тултарса пырать. Килхуçи хĕрарăмĕ пулнă Слепова юлташ, хăйĕн фронта кайнă упăшки вырăнне тăрса, рудникре сложнăй машинăсемпе ĕçлет тата сменăри заданине 200-шер процент тултарса пырать. Алешеевск районĕнчи (Башкирия) «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕн председателĕ фронта кайнă. Председатель пулма колхозниксем Соколова юлташа суйланă. Соколова юлташ халĕ общественнăй пысăк хуçалăха ăнăçлăн ертсе пырать. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă, вăрлăхсем хатĕрлесе хунă, выльăх-чĕрлĕх валли тутă апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Алешеевск районĕнче юлашки уйăх хушшинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсен заведующийĕсем пулма 55 хĕрарăма уйăрса лартнă. Илищев районĕнче 63 хĕрарăма колхоз председателĕсем пулма, 125 хĕрарăма колхозри бригадирсем пулма, 135 хĕрарăма колхозсенчи фермăсен заведующийĕсем пулма уйăрса лартнă.

Январĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 4-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисем çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма хăтланнине сире-сире пăрахса, противника техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кӳнĕ. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Боровск хулине, йышăнса илнĕ.

Январĕн 3-мĕшĕнче нимĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 11 самолетне персе антарнă.

* * *

Январĕн 3-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне 23 танк, 3 бронемашина, пехота ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 290 автомашинăна ытла, боеприпассем тиенĕ 100 лава яхăн тата бензин автоцистернине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 4 эшелона вут тивертсе çунтарса янă, противник пехотин икĕ полкне яхăн сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Мало-Ярославец хулине йышăннă чухне пирĕн пĕр часть нимĕçсенне 19 танк, 6 танкетка, 8 бронемашина, 65 оруди, 293 автомашина, 98 пулемет, 26 миномет, 48 автомат, 65 мотоцикл, 195 велосипед, 2 радиостанци, 275 лав, 158 лаша, 100 тонна сĕлĕ тата питĕ нумай продовольствисемпе боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противника хирĕç хаяррăн çапăçса, пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 7 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă та тăшманăнне 1 танк, 1 йывăр оруди, 4 станковăй пулемет, 50.000 снаряд, 11.000 мина, 72.000 патрон, йĕлтĕрсем тиенĕ 2 вагон, 3 паровоз, тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 26 вагон тытса илнĕ, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Балтика тинĕсĕнчи карапсемпе çыран хĕрринчи батарейăсем, тăшманăн позицийĕсем çине персе, нимĕçсен 3 батарейине, минометсен пĕр батарейине тата питĕ нумай автомашинисене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Леонов старшина противника хирĕç çапăçнă чухне автоматран персе фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 16 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Рота командирне амантсан, Леонов юлташ рота командованине хăй çине илнĕ те боецсене атакăна паттăррăн ертсе кайнă. Тăшмана хăйĕн позицийĕсенчен çапса кăларнă.

* * *

Мускав облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче Е. юлташ ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç ывăнма пĕлмесĕр çапăçать. Партизансем тăшманăн тупă кăкарса янă автомашинине йĕрлесе тупнă та, отряд командирĕ граната ывăтса грузовикăн кузовне тивертнĕ. Командир хыççăн боецсем те гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăтнă. Машина çинчи снарядсем çурăлса кайнипе нимĕçсен 12 салтакĕ вилнĕ, тупă юрăхсăра тухнă. Çав кунах партизансем тĕрлĕ пунктсенче фашистсен 24 салтакне, патронсем тиенĕ 2 лавне, вĕри апат тултармалли термоссем тиенĕ 1 лавне пĕтерсе тăкнă. Ытти кунсенче партизансем 13 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 1 грузовой машинине, 2 мотоциклне пĕтерсе тăкнă, 12 телефон линине касса татнă, темиçе çĕрте кабеле касса татса илнĕ. Партизансен группи, пирĕн войскăсен разведкипе пĕрле, çĕрле Г. ялĕ çине пырса тапăннă. Çапăçура фашистсен салтакĕсене 100 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Словакин 1-мĕш мотодивизин 20-мĕш мотополкĕнчи 3-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Ян Тессари допросра çапла каланă: «Декабрĕн 16-мĕшпе 25-мĕш хушшинче пирĕн ротăра 7 çын хăйсене хăйсем юри амантнă. Салтаксем вăрçăран хăтăлса юлас тесе, хăйсен аллисене хăйсемех персе амантаççĕ».

* * *

Декабрĕн 31-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле «Балейзолото» тресчĕн механически мастерскойĕсенче ĕçлекен токарь Суздалев юлташ перфораторнăй мăлатуксен деталĕсене тунă чухне сменăри нормăна 4.900 процент тултарса 554 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Хăй укçин çурринe вăл СССР оборонин фондне панă.

Январĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Белев хулине илнĕ чухне пирĕн войскăсем противника пысăк çухату кӳнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын вилсе, 2.500 çын ытла амантса пĕтнĕ. Пирĕн боецсем 25 оруди, 12 миномет, 25 станковăй пулемет, танксене хирĕç пемелли 50 пăшал, 70 автомашина, 300 велосипед, 1.000 пичке ытларах бензин, нумай снарядсем,

Малалли 4-мĕш страницăра

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1941 çулти декабрĕн 25-мĕшпе 31-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Малтанлăха шута илнĕ туллимар даннăйсем тăрăх, Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1941 çулти декабрĕн 25-мĕшпе 31-мĕш хушшинче çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 22 танк, 122 оруди, 80 миномет, 128 пулемет, 42 автомат, 1.000 винтовка, 210 автомашина, 65 мотоцикл, 3 радиостанци, 180 туллли лав, 7.000 ытла мина, 13.536 снаряд, 200.000 винтовка патронĕсем. Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен 2 штабне, груз тата противникăн чĕрĕ вăйне турттарса пыракан 745 автомашинине, 5 танкне, 21 орудине, 15 станковăй пулеметне, грузсем тиенĕ 552 лавне пĕтерсе тăкнă.

Декабрĕн 25-мĕшпе 31-мĕш числисем хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 10 пин çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Кавказ фронтĕнчи войскăсем Крымра 1941 çулти декабрĕн 28-мĕшпе 1942 çулти январĕн 2-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Керчь çурмаутравĕ çинче пыракан çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем 1941 çулти декабрĕн 28-мĕшпе 1942 çулти январĕн 2-мĕш хушшинче противникăнне çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3.000 винтовка, 150 автомат, 50 станковăй пулемет, 48 оруди, 20 миномет, 1.000 ытла мотоцикл, 250 грузовой машина, 115 çăмăл машина, 33 автобус, 256 лав, çавăн пекех тата боеприпассемпе продовольстви тата снаряжени складĕсем.

Пĕр Феодосире кăна нимĕçсемпе румынсене 2.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Калинин фронтĕнчи войскăсем 1941 çулти декабрĕн 28-мĕшпе 1942 çулти январĕн 3-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Калинин фронтĕнчи войскăсем 1941 çулти декабрĕн 28-мĕшпе 1942 çулти январĕн 3-мĕш хушшинче противникăнне çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă орудисем—340, танксемпе танкеткăсем — 19, самолетсем — 8, винтовкăсем — 3891, пулеметсем — 274, автоматсем — 686, минометсем — 53, танка хирĕç пемелли пăшалсем — 15, автомашинăсем—929, мотоциклсем — 636, велосипедсем — 622, радиостанцисем — 22, гранатăсем — 50 ещĕк, ракетăсем—40 ещĕк, тар — 145 ещĕк, тĕрлĕ калибрлă минăсем — 36.000 ытла, снарядсем — 37.889, винтовка патронĕсем — 425.000.

Кунсăр пуçне тракторсем, тягачсем, лашасем, лавсем, телефон кабелĕсем тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

ГЕРОЙСЕН ШКУЛĔ

Çĕрле пулсан чылайран эпир дивизи штабне çитрĕмĕр. Военкомпа тата ытти командирсемпе пĕрле полковник хула çывăхĕнчи вăрман хĕрринче тăрать. Боецсем-гвардеецсем çак вырăнтан фашистсене хăваласа янă та полковник халь хăй валли çĕнĕ командăй пункт шырать.

Блиндажсемпе землянкăсене васкасах йĕркене кĕртсе пыраççĕ. Командирпа комиссар хăйсен çыннисене çĕнĕ хваттерсене йĕркене кĕртсе, вĕсенче пурăнмашкăн «хăнăхса çитме» вĕрентеççĕ. «Ыран уяв пулать вĕт, хăнасем килеççĕ», — тет полковник.

Чăнласах та ыран дивизире пысăк уяв пулать. Ыран дивизи вунпилĕк çул тултарать. Хăйĕн уявне вăл çапăçу хирĕнчех кĕтсе илет...

...Вунпилĕк çул каярах Совет Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕн приказĕ тăрăх Мускаври пĕрремĕш пролетарски стрелковăй дивизие туна. Çак дивизие чи лайăх батальонсемпе полксем кĕнĕ. Мускаври уйрăм полкран дивизири пĕрремĕш стрелковăй полк туна.

Мускав çыннисене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе дивизи малтанхи çулсенчех питех те чаплă шкул пулса тăнă. Столицăра пурăнакан пиншер çамрăк рабочисемпе студентсем тата служащисем çак дивизире çапăçури сложнăй ĕçсене вĕренсе пынă. Çулсеренех икшер хут—Майăн пĕрремĕшне Октябрь уявĕнчи парадсенче — вĕсем аслă Сталин умĕнче хăйсем кирек хăçан та çапăçăва тухма хатĕррине кăтартса панă. Вĕсен тÿрĕ речĕсемпе шанчăклă та çирĕп уттисене тата вăрман пек кăнтарса пыракан çутă штыкĕсене Мускавра пурăнакан пиншер çынсем халĕ те асрах тытса тăраççĕ.

Мускав дивизийĕнчи боецсемпе командирсем тата полктработниксем хăйсене пысăк çĕнтерÿсем тума çитĕнтернĕ илемлĕрен те илемлĕ хула лавне яланах çÿлте тытса пычĕç, ăна вĕсем малашне те çаплах çÿлте тытса пырĕç. Мухтавлă соединенийĕн полкĕсенче Хĕрлĕ Çарăн талантлă командирĕсем çĕршерĕн ÿссе çитĕнчĕç. Çапла, сăмахран, Татаринов красноармеец—полковник, рота командирĕ Матыкин генерал-майор пулса тăчĕç. Малтан рота командирĕ пулнă Крейзер та халĕ генерал пулса тăчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Мускав дивизийĕ [illegible]

Эпир июлĕ уйăхĕнчи кунсене, нимĕçсем Минск патĕнче тытăнса хăйсен [illegible] астăватпăр. Мускав дивизийĕн ун чухне [illegible] тăшман тапăнăвĕсене хирĕç çапăçма тытăнчĕ. Тăшман малаллах çĕмĕрсе кĕме ĕмĕтленнисене хĕрлĕ воинсем, нимĕн ухĕнче те чарăнса тăмасăр, хăюллăн аркатса пычĕç. Нимĕçсем дивизи çавăрса илме, унăн руководствипе çыхăнăвне аркатса яма та пăхрĕç, вĕсем дивизин пехотинецĕсене хирĕç кунсерен 150-шар танк та ярса пăхрĕç, анчах дивизи хăнк та тумарĕ, вăл паникăна та сехĕрленсе ÿкмерĕ. Унăн çыннисем хурçăран шăратса тунă пекех туйăнатчĕç, вĕсем чăн-чăн богатырьсем евĕрлех çапăçрĕç.

Артиллерист Николай Дмитриев кĕпере тăшман танкĕсенчен сыхласа тăнă вăхăтра пурĕ 17 çĕртен аманнă, вăл çапах та çапăçу хирĕнчен пăрахса кайман. Вăл тăшман танкĕсен атакине çĕмĕрсе тăкиччен, юлашки снаряд пĕтиччен çапăçнă. Çак паттăр боецăн çан-çурăмĕнчен врачсем пурĕ вунçичĕ тимĕр татăкĕ кăларчĕç.

Вăл кунсенче дивизири пур боецсем те çапла çапăçрĕç.

Борисовпа Орша патĕнче пулнă çапăçусенче çак дивизи фашистсем малалла куçса кĕрессине нумай вăхătлăха чарса лартрĕ.

Командованин боевой заданийĕсене фронтра кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çак ĕçре паттăрлăхпа хăюллăх кăтартнăшăн дивизие Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕç. Дивизин боецсемпе командирсене 500 çынна ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă.

Çак дивизи гварди дивизийĕ пулса тăчĕ.

Фашистсем Мускав çинелле тапăнса кĕнĕ вăхăтри хăрушă кунсенче Мускаври пĕрремĕш гвардейски мотострелковăй дивизи столица патне пымалли вырăнсене хурçă стена пек хÿтĕлесе тăчĕ. Москвичсем-гвардеецсем икĕ уйăх хушши ытла каялла пĕр утăм чакмасăр тăшмана хирĕç вăйлăн çапăçрĕç, тăшманăн чĕрĕ вăйне куллен пĕтерсе пычĕç.

Нимĕçсем пĕр хут кăна мар хăйсен юратнă меслечĕсемпе усă курса, дивизие «çавăрса» илме, унăн çине «савăлланса» кĕме, ăна икĕ енчен те «хĕстерсе» илме хăтланса пăхрĕç. Анчах дивизири боецсене вĕсем ниепле те шиклентерсе ÿкереймерĕç! Декабрь уйăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенчен пĕринче гвардеецсем нимĕçсен «савăлне» хирĕç хăйсем «савăл» туса нимĕçсем çине кĕрсе çĕмĕрсе тăкрĕç. Çав çапăçура вĕсем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене пурĕ виçĕ пин çынна вĕлерсе пĕтерчĕç. Кунсăр пуçне [illegible] тăшманăн 19 тупă, 12 миномет, 56 станковăй тата ручной пулемет, 157 винтовка, 11 танк, автомашинăсемпе мотоциклсем [illegible] тытса илчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă хирĕсенче [illegible] çапăçса çитрĕç. Вĕсене нимĕнле хăрушлăх та чарса тăраймĕ, нимĕнле хăрушлăх та шиклентерсе ÿкермĕ. Вĕсем малалла—çĕнтерÿ патнелле хăюллăн пыраççĕ!

В. ЧЕРНЫШЕВ.

(«Комсомольская правда» хаçатран).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Сурçĕр-Хĕвеланăç енĕ). Укерчĕк çинче: пулеметчик А. С. Махеев тата боец Н. Т. Чиминеев противника переççĕ.
И. ОЗЕРСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ДОНБАСС ÇЫННИСЕМ

Донри шахтерсем вĕсем — большевикла хĕрсе пиçĕхнĕ çынсем. Граждăн вăрçи çулĕсенче вĕсен ашшĕсем белогвардеецсене çапа-çапа аркатнă. Хальхи вăхăтра вĕсен тăванĕсемпе юлташĕсем юрпа витĕннĕ вĕçĕмсĕр Дон çеçенхирĕсенче нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕреççĕ.

Çак боецсен кунçулĕ халĕ урăхла килсе тухнă. Донбасс шахтисенчи тата заводĕсенчи коммунистсемпе комсомолецсенчен батальон туса хунă. Ку батальона танковăй бригада çумне çирĕплетнĕ те, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме Мускав патне янă.

— Эпир — тылри çынсем, — тесе шÿт тăвать батальон командирĕ Земсков.

Земсков батальонĕ Воробьевка ялĕшĕн пынă çапăçусенче хăйĕн пысăк пултарулăхне кăтартса пачĕ. Батальона [illegible] вăйлă отрядне пĕтерсе тăкма хушнă пулнă. Паттăр боецсем çине, пăр çунă пек, вĕçĕмсĕр мина тăкăннă. Анчах вĕсем çаплах малалла пынă. Земсков хăй боецĕсене виçĕ хутчен тăрата-тăрата атакăсене илсе кайнă. Нимĕçсем вĕсене хирĕç танксем кăларса янă, апла пулин те пирĕн çынсем хăраса ÿкмен. Пулеметчик Дульцев, вăрçăччен Крупская ячĕпе тăракан шахтăра врубовăй машинăпа ĕçленĕскер, хăйĕн пулеметне нимĕç танкĕ гусеницăсемпе таптаса лапчăтиччен персе тăнă. Пырса çитнĕ танкран Дульцев сиксе пăрăнма ĕлкĕрнĕ тата çав самантрах танка горючи тултарнă бутылкăпа пенĕ.

Батальона нимĕç танкĕсем пусмăрласа çитерне. Анчах та çав вăхăтра ăна пулăшма резервра тăнă рота пырса çитнĕ. Истребительсен группин командирĕ—кĕçĕн лейтенант Шайкенов пĕр канава кĕрсе ларнă та нимĕçсене çывăхарах ярса вĕсен ултă танкне вут тивертсе янă.

Кас пулнă. Çапăçу лăпланса пынă. Ку çапăçу мĕнпе вĕçленесси ыран ирхине тин паллă пулмалла пек, тата вăл нимĕçсем çĕнтерниле вĕçленмелле пек туйăннă. Мĕншĕн тесен, тăшманăн танксем пулнă, çав вăхăтрах вырăнти условисем пирĕн танксене кунта пыма май паман. Çаксене кура, Земсков чее майсемпе çĕрлехи вăхăтра хăюллă атака тăвать. Нимĕçсем ун пек атакăна кĕтмен.

Çак çапăçура Земсков батальонĕ пин фашиста ытла пĕтерсе тăкать. Тул çуталас умĕн пĕтĕм яла тăшманран тасатаççĕ. Çак операцие тунăшăн Земсков командирпа унăн 33 боецне орденсем парса наградăларĕç.

Земсков батальонне эпир Тула облаçĕн районĕсенчен пĕринче тĕл пултăмăр. Вăл чакакан тăшмана çапăçусемпех хыçран йĕрлесе пыратчĕ. Б. ялĕ патĕнче батальон нимĕçсен вăйлă контратакисене чăтса ирттерчĕ.

Нимĕçсен пуклак сăмсаллă броневикĕсем, вĕсем хыççăн танкĕсем, çул çинче чăма-чăма малалла ыткăнаççĕ. Броневиксемпе танксем хыççăн шинелĕсене йÿле янă автоматчиксем чупса пыраççĕ. Земсков пĕтĕм хĕçпăшал вутне пехота çине çеç яма хушать. Пирĕн тĕмескесем хыçĕсене пытанса ларнă боецсем фашистсен автоматчикĕсене тăвăллă вутпа çунтарма тытăнаççĕ. Нимĕçсем юр кĕрчĕ çинче такăна-такăна ÿкеççĕ, тăраççĕ те каллех ÿкеççĕ. Танксенчен пĕрин çинче люк çĕкленет те унтан нимĕç офицерĕ сиксе тухать. Пистолечĕпе суллакаласа, вăл пехотинецсене темскер кăшкăрать. Земсков ăна тĕллет. Автоматран кĕске черет кăларса янипе офицер яланлăхах танк ăшне пытанать.

Пехота таталса юлнине кура, танксем чарăнса тăраççĕ. Унтан вĕсем çавăрăнаççĕ те батальона флангран пырса тапăнма пуçлаççĕ. Земсков çак вăхăтра танксене хирĕç хăйĕн истребителĕсене кăларса тăратма ĕлкĕрет.

Земсков батальонĕ минометсемпе аван усă курма пĕлет. Тыткалама пĕлекен алăсене пула миномет нимĕçсене пысăк сухату кÿрет.

Скопинцев тата Паршин разведчиксем, боевой задани илнĕ хыççăн, минометсене грузовик çине тиеççĕ те хăйсен расчечĕсемпе пĕрле Д. ялĕ патне каяççĕ. Нумай вăхăт засадăра ларнă хыççăн вĕсем çапăçасшăн çавтери тунсăхласа çитнĕ пулнă. Машина ял патне çитиччен Скопинцев нимĕç автоматчикĕсен ушкăнне курать. Вăл васкасах машинăна чарма тата минометсене майлаштарса лартма хушать.

— Пĕтĕм минометсенчен ял тăрăх сапаласа перĕр!

Нимĕçсем вăрманалла тараççĕ.

— Наводчик Пюхарев, фашистсене куратăр-и? Давай виçĕ минометран сылтăмарах пеме пуçлăр!

Унтан минометсене тата çывăхарах, 200 метр яхăна, йăтса пырса лартаççĕ. Виçĕ минометран харăсах вăрман çинелле пеме пуçлаççĕ.

Красноармеецсем вăрмана çитсе кĕрсен, унта юрпа витĕннĕ çĕр çинче хутланса ÿкнĕ нимĕç виллисем сапаланса выртнине кураççĕ.

Яла вырнаçса ларнă нимĕçсене вăрмантан икĕ миномет тĕллесе пекех пеме тытăнаççĕ. Виççĕмĕш миномечĕ, чакса пыракан фашистсене пÿлме, çул тăрăх пеме пуçлать.

Фашистсен юлашки автоматчикĕ те шарлама пăрахсан, Скопинцевпа Паршин хăйсен боецĕсене ял хушшине илсе кĕреççĕ. Урам хушшисем пуртех нимĕç виллисемпе тулса ларнă мĕн.

Скопинцев штаба связист ярса çапла пĕлтерет:

— Задание пурнăçларăмăр. Яла нимĕçсенчен тасатрăмăр. Виçĕ тупă, пĕр автомашина, 3.000 патрон, 30 автомат тытса илтĕмĕр. Халлĕхе 73 фашист вилли шутласа кăлартăмăр, вĕсем хушшинче виçĕ офицер.

А. БУЛГАКОВ.

«Известия» хаçатăн спецкорĕ.

ТУЛА ЕНĔ.

ХАЯР ТĔЛПУЛУ

Эпир боевой приказ илтĕмĕр: Р. ятлă пĕчĕк сăрт тĕлĕнче сулахай енчен противник тылне çĕмĕрсе кĕрсе каймалла та, вĕсен речĕсене арпаштарса ярса, хамăрăн пехотнăй чаçсене тăшмана сылтăмран пырса атакăлама май памалла.

Эпир икĕ ушкăна уйăрălса, приказа пурнăçлама тытăнтăмăр. Эпĕ тăватă танк пуçĕнче тăраттăм, хам тăшманшăн питех те хăрушă вăй пулса тăракан хăватлă машина ăшĕнче ларса пыраттăм. Манпа пĕрле — манăн çывăх тусăм лейтенант Швидко тата ытти юлташсем.

Пĕр самант хушши эпир хирпеле пытăмăр, унтан питĕ илемлĕ пĕчĕк хутор çумĕпе иртсе, лăпкă вăрмана кĕтĕмĕр. Сасартăк оруди залпĕ янраса кайрĕ. Эпĕ, пĕр самантра танк ăшĕнчен сиксе тухса, çÿлĕрех тĕме çине улăхса тăтăм та бинокль витĕр йĕри-тавралла пăхма пуçларăм. Унччен те пулмарĕ — иккĕмĕш залп кĕрлесе кайрĕ. Ку залп тăрăх эпĕ малта, инçетре, кÿлĕ леш енче нимĕçсен йывăр танкĕсем ушкăнланса тăнине уйăрса илтĕм. Шутласа пăхрăм та, мĕнпурĕ вунвиçĕ танк. Пирĕн тăватă танк кăна. Тăватă танк — вунвиççе хирĕç! Вăйсем пĕр тан мар, çапах та эпĕ нимĕç танкĕсене хирĕç пурĕ-пĕр çапăçма шут турăм. Тăшманăн вăйĕ пирĕннинчен ытларах чух та ăна хирĕç кĕрешме кирлĕ тесе шутлатăп эпĕ. Çапăçура çухалса кайманни тата тĕрĕс расчетсем йышăнни — акă мĕн пулăшать тăшмана çĕнтермешкĕн.

Пĕр минута та иртмерĕ, эпĕ хамăр машинăсем патне пырса мĕн тумалли çинчен приказ парса та хутăм. Нестеровпа Каминер юлташсем ертсе пыракан икĕ танк сылтăмалла уйăрălса кайрĕç. Линков хăйĕн вырăнĕнчех юлчĕ, эпĕ хам экипажпала тÿрех тăшман флангĕ çине ыткăнтăм.

Пире хирĕç нимĕçсен виçĕ шултра танкĕ вăрханса килет. Вĕсен орудийĕсем татти-сыпписĕрех вут-хĕм сирпĕнтереççĕ. Анчах снарядсем пирĕнтен пайтах айăкра шартлатса çурăлаççĕ. Тăшман, эпир ку вăхăтчен вĕсем çинелле пĕрре те пеменнине кура, самаях тĕлĕннĕ пулмалла.

Эпир нимĕн шарламасăр малалла çĕмĕрттерсе пыни тăшмана шухăша ячĕ пулас: вĕсем патах чарăнчĕç.

— Ну, тусăмсем, калар хамăр сăмаха, — терĕм эпĕ юлташсене.—Пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш танксем çине сайран пеме тытăнăр!

Пирĕн орудисем пенипе сывлăш янăраса кайрĕ. Тăшманăн икĕ танкĕ çăра тĕтĕм ăшне путса çухалчĕç, виççĕмĕшĕ пĕр вырăнтах тапăртаткаласа каялла чакма пуçларĕ. Самантлăха тупăсем шăпланчĕç. Комсомолец Климов, çак шăплăхпа усă курса, танк ăшĕнчен тулалла сиксе тухрĕ.

Эпĕ çак самантра Климова хăй мĕнле пĕлнĕ пек тума чармарăм. Çав хушăра тăшманăн виççĕмĕш танкĕ, çывăх юлнăскер, пирĕн танк çине шултра снарядсемпе пеме тытăнчĕ. Хĕрÿллĕ çапăçу пуçланса кайрĕ. Эпĕ противник çине пĕтĕм хăвăртлăхпа пырса кĕрсе ăна хыçалтан тапăнса пĕтерсе тăкма шутларăм. Анчах ку плана пурнăçлама май пулмарĕ. Сулахайран, вĕтĕ чăрăшлăхпа витĕннĕ сăрт хыçĕнчен, кĕтмен-туман çĕртен тăшманăн тăваттăмĕш танкĕ сиксе тухрĕ. Вăл тÿрех пирĕн çинелле талпăнса килет. Мĕн тăвас? Аçталла ыткăнмалла? Пĕр вырăнтах юлсан — тăшманăн икĕ танкĕшĕн те лайăх кăна мишень пулса юлатпăр, пĕр танкне хирĕç тухас —иккĕмĕшĕ пирĕн çине хыçран тапăнма пултарать. Чăннипех нимĕн тума та аптăрамалла положение лекрĕмĕр.

Эпĕ, тупăсенчен пеме чарăнса çĕнĕрен сиксе тухнă танк çине пĕтĕм хăвăртлăхпа пырса тапăнма приказ патăм. Тăшман танкĕ çине мĕнпур вăйпа пырса çапăнса ăна пĕтĕмпех таптаса лапчăтас килсе кайрĕ. Анчах фашистсен машини ман шухăша сисрĕ те, шăлĕсене шатăртаттарса, айăккалла сиксе ÿкрĕ. Виççĕмĕш танкран кăларса янă икĕ снаряд пирĕн çумрах çурăлса кайрĕ.

Çапăçу шăпине нимĕн кĕтмен çĕртен сиксе тухнă япала татса пачĕ. Таçтан аякран, тĕмсем хушшинчен, тăваттăмĕш танк çине такам çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарма пуçларĕ. Бутылкăсем пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра ÿкеççĕ. Унччен те пулмарĕ, тăшман танкне вут хыпса илчĕ те, ирсĕр фашистсен машини ялкăшсах çунма тытăнчĕ. Пĕлĕтелле хура тĕтĕм кăна мăкăрланса хăпарать.

— Климов! Сашка, вăт шельмă ачи!

— Тупата, Сашка Климов ку! — савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ Швидко.

Тепĕр çур минутăран тăшман танкĕ çине бутылкăсем перекенни чăнах та Сашка Климов пулнине хамăр куçпах куртăмăр. Вăл, пысăках мар тапчам кĕлеткеллĕскер, тÿрех çунакан танк патнелле ыткăнса чупса кайрĕ. Аллине сулса ярса, вăл тăшман танкĕн гусеници айне пĕр граната ывăтрĕ, унтан тата тепĕр граната вăркăнтарчĕ. Танк кăнттамăн сиксе ÿкрĕ, сулкаланса кайрĕ, вара, вĕрпе çулăмпа ялкăшса, шăвăнса каялла чакрĕ.

— Ну-ка, Ганссем, Карлсем, Адольфсем, тухăр хăвăртрах! — тесе кăшкăрса ячĕ Климов. Вăл питĕ хытă кăшкăрнă пирки ун сассине эпир те яр уççăнах илтрĕмĕр.

— Тухăр хăвăртрах, ирсĕр фашистсем, каласса пăхар сирĕнпе!

Климов сăмахĕсене итлесе тенĕ пекех, çунакан танкăн люкĕ кăштах уçăлчĕ: хура тумтирлĕ нимĕç çÿлелле кармашни курăнчĕ. Вăл темĕскер каласа çухăрашать, аллисемпе сулкалать, такама туртса кăларма тăрăшса сехĕрленет. Анчах та ни вăл хăй, ни унăн юлташĕсем танкран ниепле те тухаймарĕç. Люк пĕтĕм вăйпала шартлатса хупăнчĕ. Танк ăшĕнче темĕн питĕ вăйлăн хăпăрлатса çурăлса кайрĕ. Фашистсен шăпи тулчĕ.

Çак вăхăтра аяккарахра тăракан нимĕç танкĕ, пăтрашу саманчĕпе усă курса, аяккалла шăвăнма шутларĕ. Мулкачла йăлт! кăна курăнас тесе, вăл каялла çавăрăнма та ĕлкĕрчĕ. Анчах эпир ăна çийĕнчех асăрхарăмăр. Тÿрех ун çинелле ыткăнса ун аяккине тухрăмăр та тÿрĕ наводкăпа орудирен темиçе хутчен кĕрслеттертĕмĕр. Фашистсен юлашки танкĕ чунсăр пулса хăяккăн йăванса кайрĕ.

Тепĕр сехетрен эпир Нестеровпа Калинера тĕл пултăмăр. Эпĕ хамăн тусăмсем хаяр çапăçура тăшманăн виçĕ танкне пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтĕм. Çапăçура Нестерова пуçĕнчен амантнă, боец-наблюдатель Симуков ирсĕр тăшман пульли тивнипе вилнĕ. Пирĕн паттăр танкистсем тăшманăн вунвиçĕ танкĕнчен çиччĕшне çапăçу хирĕнче аркатса тăкнă тата çунтарса янă.

Капитан ИВАН ПРОШИН,
Совет Союзĕн Геройĕ.
ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ.

Крымри хаяр çапăçусем

КАВКАЗ ФРОНЧĔ, январĕн 3-мĕш. («Правда» спецвоенкорĕсем). Кавказ фронтĕнчи чаçсемпе хура тинĕс флочĕн чĕçĕсем неприятелĕн войскисене малаллах хĕссе пыраççĕ. Пирĕн чаçсем вăйлăн пырса çапнинчен противник хăйĕн чĕрĕ вăйĕпе техникине çăлса хăварма, çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма хăтланать, анчах нимĕçсен полкĕсене çав-çавах каялла хăвăрттăн чакма лекет. Пирĕн красноармеецсемпе краснофлотецсем, каялла чакакан противника хăваласа пырса, халăх пурăнакан пĕр пункт хыççăн теприне йышăнса илеççĕ.

Хаяр çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

М. МЕРЖАНОВ.
Ф. КОЗЫРЕВ.

Тискер кайăк йăвинче

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ. Н-ски чаçĕн соединенийĕсем малалла куçса пынă май нимĕçсенчен пĕр ял хыççăн тепĕр ял турта-турта илеççĕ. Ирĕке кăларнă çĕр çинче Гитлер бандичĕсем хуçаланнин таса мар йĕрĕсем палăраççĕ. Нимĕçсем пурăннă çуртсемпе блиндажсем фашистсен çарĕн тискер шухăш-кăмăлĕсене питĕ лайăх кăтартса параççĕ.

Акă, Пысăк Вишерăри блиндаж. Ку ĕнтĕ салтак выртса-тăнă вырăн мар, ик уралла чăн-чăн тискер кайăккăн йăви. Блиндажра пыйтланса пĕтнĕ сĕтĕк-çатăк кĕпе-тумтир шăршланса выртать. Кунтах тата вăрласа пухнă кĕпе-тумтир: хĕрарăм кофтисем, кĕрĕк пиншаксем, ача-пăча йĕмĕсем, трусиксем нимĕн йĕркисĕр хупаланса выртаççĕ. Пирĕн боецсенчен хăраса тарса блиндажра пурăннă нимĕç салтакĕсем васканипе алла мĕн çакланнисене илнĕ те, ыттисене çакăнтах пăрахса хăварнă.

Аякра та мар офицерсен блиндажĕ пур. Кунта та салтаксен блиндажĕнчи пекех таса мар, шăршлă. Анчах кунта япаласем, матрацсем, куçкĕскисем йăваланса выртаççĕ.

Эпир пĕр блиндажран тепĕр блиндажа пăхса тухатпăр. Кашни вĕт-шак япалах Гитлер воякисен культурăлăхĕ питĕ пĕчĕккине, вĕсем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен пĕтнĕ çынсем пулнине кăтартса парать. Нимĕç салтакĕсем пурăннă вырăнсенче пĕр кĕнеке те тупма çук, анчах ун вырăнне темĕн чухлĕ порнографиллĕ ÿкерчĕксем курма пулать. Пĕр землянка алăкĕ тăрринче вывеска çакăнса тăрать. Ун çине эрех бокалĕ йăтнă çурма çарамас хĕрарăма ÿкернĕ. Вывески çинче: «Кăмăла киллентермелли блиндаж» тесе çырса хунă. Çакăнта, тискер кайăксен çак йăвине, салтаксем совет хĕрĕсене тĕрсе килнĕ те, вĕсенчен çавтери ирсĕррĕн мăшкăлланă. Блиндажра ...ялăсем, пушă эрех бутылкисем, çĕтĕлсе çуркаланса пĕтнĕ хĕрарăм кĕпи-тумтирĕсем сапаланса выртаççĕ. Гитлеровецсем Дюссельдорфски тесе ят панă урамра тепĕр вывеска çакăнса тăрать. Кунта казино усна пулнă... Нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ территорире тăвакан «çĕнĕ йĕрке» çакăн пек ĕнтĕ.

Эрех ĕçсе ăскăнланасси, картла вылясси, çаратасси тата пусмăрласси — çакăн пек ĕнтĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен профессиллĕ ĕçĕсем. Пирĕн алла 126-мĕш пехотнăй дивизин 45-мĕш номерлĕ интереслĕ приказĕ лекнĕ. Салтаксем эрех ĕçесшĕн çавтери çуннă пирки, вĕсем тĕрлĕ отравляющи япаласем ĕçсе час-часах ушкăнĕ-ушкăнĕпех сиенленеççĕ иккен. Пĕр мастерскойра салтаксем метиловăй спирт пички тупнă. Вĕсем çавăнтах çав спирта ĕçсе янă та сусăрланса ÿкнĕ. Çакăн çинчен приказра, тăтăшах пулса пыракан ĕç çинчен калана пекех, çырса кăтартнă:

«Вырăссенчен туртса илнĕ спирта ĕçсе 95 салтак йывăр чирленĕ, вĕсенчен 10-шĕ вилнĕ. Чирленин сăлтавĕ — метиловăй спирт ĕçни пулса тăрать. Çар чаçĕсене метиловăй спирта ĕçме юраманни çинчен пĕлтерсе асăрхаттармалла. Тытса илнĕ спирта яланах 16-мĕш çарăн хими станцийĕнче тĕпчесе пĕлмелле те, çавăн хыççăн тин вара ăна чаçсене валеçсе пама юрать. Тĕпчемешкĕн спиртăн тĕслĕхне бутылкăна тултармалла та, ăна дивизин тăваттăмĕш отделенине ярса памалла».

Çапла ĕнтĕ, салтаксене дивизийĕ дивизийĕпех ĕçсе ăскăнма чармаççĕ. Ĕç, мĕн чухлĕ ĕçес килет, анчах ĕçсе ан сывмарлан çеç!

Пирĕн боецсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене блиндажсенчен хĕсе-хĕсе кăларса фашистсен салтакĕсем обществăн каяшĕсем, ик уралла тискер кайăксем, шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен пушанса юлнă йĕрĕнчĕксем пулса тăнине кунран-кун ытларах та ытларах курса ĕненеççĕ.

(«Красная звезда» хаçатран).

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЕ ВИЛĔМ! Укерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): 1) дивизи командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ полковник А. Лизюков, полк комиссарĕ В. Машков тата полковник Д. Бахметьев противник оборонин малти линине сăнаççĕ, 2) паттăр боецсем Мус кавран малти позицие каяççĕ, 3) минометсем тăвакан заводра.

ТАСС фотохроники.

ВАСКАВЛĂ ЗАКАЗСЕМ

Ку цех пĕр 6—7 уйăх каялла ним енчен те паллă пулман, вăл ыттисене пулăшакан цех кăна шутланнă. Унта завода кирлĕ вак-тĕвек япаласем пулнă, çĕмĕрĕлнĕ машинăсен тата инструментсен пайĕсене юсанă.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче цехра пысăк улшăну пулса иртрĕ. Халĕ кунта рабочисемпе работницăсем кунĕн-çĕрĕн хастарлă ĕçре. Вĕсем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа — тăван Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота производствăра стахановла ĕçленипе пулăшас тесе тăрăшаççĕ.

Нумаях та пулмасть цеха васкавлă заказ тума пачĕç. Ĕçе тытăначчен цех начальникĕ Николаев юлташ рабочисене пухрĕ те çитес кунсенче пулмалли ĕçсем çинчен каласа кăтартрĕ.

— Пирĕн заказ питех те кирлĕ ĕçе каять, ăна мĕнле те пулсан хăвăртрах, васкавлăрах тумалла,—терĕ начальник. Рабочисем заказа срокчен пурнăçлама сăмах пачĕç.

Хĕрўллĕ ĕç пуçланчĕ. Чылай рабочисем икшер-виçшер смена хушши цехран тухмасăр ĕçлерĕç. Вĕсене канма [illegible]сан та, ĕçе хăвăртрах пĕтерес тесе, каллех цеха пырса станоксем умне тăчĕç. Стахановец Михуткин 30 сехет хушши цехра ĕçленĕ хыççăн 4 сехет кайса каннă та каллех ĕçлеме тухнă. С. Моторин, А. Романов, И. Белоз юлташсем те 24—30 сехет хушши производствăран тухман, хăйсен нормисене вĕсем 250—400 процент тултарса пынă.

Рабочисем çакăн пек хастарлăхпа ĕçленине пула ĕнтĕ цех хăйне панă задание 48 сехет малтан пурнăçлама пултарчĕ.

— Эпир кашни уйăхрах хамăра панă задание 150—200 процент тултаратпăр. Пирĕн цехра нормăна тултараймансем çук, двухсотниксемпе трехсотниксен хисепĕ ўссех пырать,—терĕ цех начальникĕ Николаев юлташ.

«Большевик» заводри ытти цехсем пурте çак цехран пример илсе ĕçлеççĕ.

* * *

Декабрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче «Красный Октябрь» промысла артельне каçхине 11 сехетре васкавлă заказ пырса панă, ăна 8 сехет хушшинче пурнăçламалла пулнă. Артель председателĕ коммунист Ильин юлташ нумаях та шухăшласа тăман, виç сехет каялла анчах сменăран ĕçлесе тухнă рабочисене пухнă та çавăн çинчен каласа панă.

— Ну, мĕнех-ха вăл пире. Кирлĕ пулсан темиçе талăк хушши ĕçлеме те пултаратпăр. Ку заказа эпир ыран иртчен пурнăçлатпăр, — тенĕ рабочисем. Вĕсем çавăнтах задание пурнăçлама тытăннă. Кану пулман. Вăхăт мĕнле иртсе пынине те никам та асăрхайман. Çичĕ сехет ытларах ĕçлесе, васкавлă заказа пурнăçланă.

Çак каçхине В. Цейтер, А. Шефер, А. Бельков, А. Козлов тата ытти юлташсем те кашниех нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултарнă, продукци пахалăхĕ те лайăх пулнă.

Артель ĕçĕнче кун пек тĕслĕхсем сахал мар. Панă заказа артель членĕсем мĕнле те пулсан лайăхрах тата хăвăртрах туса çитерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем тăван Хĕрлĕ Çара, фронта пулăшма яланах хатĕр.

Производство программине тултарас, ĕç тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе уйрăмăнах тимĕрçĕ цехĕ пример кăтартать. Цех коллективĕ кашни уйăхрах хăйĕн программине темиçе хут ирттерсе тултарать. Сăмахран, ноябрь уйăхĕн планне вăл 409 процент, 11 уйăх программине 305 процент тултарнă.

Халĕ цех коллективĕ ятарласа панă заказа пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет. Рабочисем хушшинче ăмăрту нихçанхинчен ытла сарăлса кайнă. Вĕсем нормăна тултарассишĕн кăна мар, ăна темиçе хут ирттерсе тултарассишĕн тата продукцине отлично пахалăхпа çеç туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

Тимĕрçĕ Цейтер артельре виççĕмĕш уйăх çеç ĕçлет. Унччен вăл чугунçул деповĕнче ĕçленĕ. Унта вăл стахановец пулнă, хăйне панă нормăна 500—600-шер процент тултарса пынă. Çав хăвăртлăхсене Цейтер юлташ халĕ те чакармасть, уйрăм кунсенче татах та ытларах ўсĕмсем тăвать. Сăмахран, сменăра унăн 56 болт тумалла пулсан, вăл 250—300 болт тăвать. Ытти йышши детальсем тăвас тĕлĕшпе те вăл тухăçлăн ĕçлет.

А. Смеловицкий, А. Яковлев, И. Мигушов, Е. Петров юлташсем цеха 3—5 уйăх каярах килнĕ, халĕ вĕсем сборщиксем. Кĕске вăхăт хушшинчех вĕсем технологи процесне вĕренсе çитрĕç, декабрь уйăхĕнче кашниех, васкавлă заказсем тунă çĕрте ĕçлесе, нормăсене 2—2,5 хут ирттерсе тултарса пычĕç. Анчах ку цифрăсем вĕсемшĕн виçе мар, çак уйăхра вĕсем татах та ытларах çитĕнўсем тума тăрăшаççĕ.

* * *

Николай Пантюшкин çамрăк-ха, 17 çула çеç кайнă. Сакăр уйăх каярах вăл «Труженик» заводри столярнăй цеха ученик пулса ĕçлеме кĕнĕ. Кунта ăна сĕтел-пукансем, дивансем, тумбочкăсем тума вĕрентнĕ. Çамрăк рабочи квалификациллĕ столярсем кăтартнине тивĕçлĕн пурнăçласа пыма тăрăшнă, вĕсем каланине итленĕ. Чылай чухне тата вăл смена хыççăн та каярах юлса ыттисем мĕнле ĕçленине пăхса çўренĕ, сăнанă. «Хăçан та пулсан эпĕ те вĕсем пекех ĕçлеме пуçлатăп» тесе шухăшланă вăл.

Пĕр уйăх иртнĕ, иккĕ, виççĕ... Пантюшкин хăй тĕллĕнех ĕçлеме пуçланă. Каярахпа вара ăна столяр ятне панă.

Халĕ вăл цехра чи ответлă ĕçре ĕçлет, илемлĕ те яка йĕлтĕрсем тăвать. Васкавлă заказ, ăна вăхăтра тумалла! Çакна Пантюшкин юлташ лайăх пĕлет. Çавăнпа вăл панă заказа мĕнле те пулсан лайăхрах тата ытларах туса кăларма тăрăшать. Юлашки вăхăтра вăл кулленех нормăна 170—200 процент тултарса ĕçлет.

Николай Пантюшкин цехра пĕччен мар. Ун пек тухăçлăн ĕçлекенсем кунта татах та пур, вĕсем кулленхи ĕçре палăрса пыраççĕ. Акă Савинов юлташа илме пулать. Вăл станочник, токарь. Норма тăрăх унăн сменăра 100 деталь тумалла, вăл 200 деталь тăвать. Васкавлă заказсене пурнăçланă чухне вăл 12—13 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлет.

Машиннăй отделенире тĕрлĕрен станоксем пур, вĕсен умĕнче пуринчен ытларах хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Прохорова юлташ паянхи куна 4—5 станокпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Хальхи вăхăтра вăл сверлильнăй станокпа ĕçлет, нормăна нихçан та 150 процентран кая тултармасть. Юлашки уйăхсенче Ольга Зубрилина станочница та нормăна 150-шар процент тултарса пычĕ, вăл халь васкавлă заказсем тума детальсем хатĕрлесе парать.

Çакăн пек ĕçлеççĕ Совет патриочĕсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче.

Х. ЛИСИН.

1942 ÇУЛТИ ÇУРАКИ УМĔН. **Укерчĕк çинче:** Шупашкар районĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхозри тимĕрçĕ Т. И. Юдин юлташ тимĕрçĕ лаççинче ялхуçалăх машинисене юсать. ЯСТРЖЕМБСКИЙ фотоўкерчĕкĕ.

Çĕрулмине лайăх сыхласа усрар

Халăх хуçалăхĕнче çĕрулми пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа партипе правительство колхозсене çĕрулми ытларах лартма хушаççĕ, ăна лайăх çитĕнтерме, пуçтарса кĕртме тата унпа кирлĕ пек усă курма кирлине кăтартса параççĕ.

Кăçал пирĕн колхозсем çĕрулми нумай туса илчĕç. Çĕрпў районĕ çуртырри акмалли лаптăкăн 12 процентчĕ чухлĕ çĕр çинче çĕрулми лартса туса илчĕ. Çĕрулми тухăçлăхĕ иртнĕ çулхисенчен кая мар пулчĕ.

Анăçлă пулнă тата пухса кĕртнĕ çĕрулмине лайăх пăхса усрасси халĕ кашни колхозăн вăраха ямасăр тумалли ĕçĕ пулса тăрать. Çĕрулми часах пăсăлса кайса çĕрме пултарнине колхозниксем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа ăна лайăх пăхса усрама кирлĕ. Çĕрулми усрамалли вырăнсем, пусăсем, нўхрепсем типĕ пулмалла, çĕрулмине усрама хунă чухне суйламалла, çĕрĕккисенчен, касăлнисенчен тасатмалла. Çĕрулми вăл çĕртен кăларнă хыççăнах хытă сывлать, çавăнпа ăна усрамалли вырăнсене сивĕ çанталăк пуличчен уçă тытмалла. Çĕрулми сийĕн хулăмĕшне пĕр метртан ытла тумалла мар. Çĕрулмине тĕттĕм çĕрте усрамалла тата вăл вырăнсенче сывлăшăн температури 1—3 градус ăшă пулмалла. Унтан та ăшă пулсан, вара çĕрулми çеçке кăларма тытăнать, унăн пахалăхĕ чакать. Çак условисене пурнăçласа пырсан, эпир çĕрулмине килес çуркуннеччен лайăх усрама пултарăпăр.

Нумаях пулмасть эпир Çĕрпў районĕнчи колхозсенчи çĕрулмине мĕнле усранине тĕрĕслесе тухрăмăр. Нумай колхозсенче лайăх тирпейлесе хуман пирки çĕрулми çĕрме тытăнни курăнчĕ. «Çĕнĕ çул», «Кульмет» тата ытти колхозсенче çĕрулмине вăхăтра кăларса кĕртмен. Çавăн пирки шăннă çĕрулмисем пур. Çав шăннă çĕрулмисене суйласа илмесĕрех улмана пĕр çĕре хывнă. Çавăн пирки лайăх улмасем те çĕрме тытăннă.

Хăшпĕр колхозсенче çĕрулмине лайăх пăхса усрама нимĕн те тумаççĕ. «Хĕрлĕ Тивĕш» колхоз кăçал туса илнĕ çĕрулмине тăвалă вырăна хунă. Тăвалă çĕрте те çĕрулми шăннă. Вăл шутра 35 центнер вăрлăхлăх çĕрулмите, колхозниксене салатмалли фонд та пулнă. Выльăх-чĕрлĕх ферми валли уйăрнă çĕрулми те çурри ытла шăннă. Çакă вăл колхоз руководителĕсем çĕрулмине упрас ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхманран пулнă.

Çитес çул пирĕн республикăри колхозсем, вăл шутра Çĕрпў районĕнчи колхозсем те, çĕрулми иртнĕ çулхинчен чылаях нумай лартмалла. Хĕрлĕ Çар тата промышленность ыйтнисене тивĕçтерме пирĕн колхозсем çитес çул 2—3 хут ытларах çĕрулми лартса тумалла. Çак задачăна пурнăçа кĕртме халĕ колхозсен вăрлăхлăх çĕрулмине суйласа çĕрĕккисемпе пăсăккисенчен тасатмалла та лайăх пăхса усрамалла. Нумайрах лартма вăрлăх та нумай кирлĕ, ăна пирĕн аякран илсе килмелле мар.

Агроном Л. АНИСИМОВ.

ШКУЛТИ ОБОРОНА ĔÇĔ

ЭЛЕК. («Чăваш Коммуни» корр.). Вырăс Сормĕнчи вăтам шкул вĕренў программине вăрçă вăхăтĕнчи обстановкăпа çыхăнтарса ĕçлет. Программăна çар ĕçĕпе физкультурăна тата ялхуçалăх ĕçĕсене вĕрентессине кĕртсе пысăклатнă.

Иртнĕ çулти декабрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 9-мĕшпе 10-мĕш классенче вĕренекенсем всевобуч йĕркипе çар ĕçне вĕренме тытăнчĕç: тăххăрмĕш класра вĕренекенсем — 132 сехетлĕ программăпа, вуннăмĕш класра—165 сехетлĕ программăпа вĕренеççĕ. Паянхи кун тĕлне 9 заняти ирттернĕ. Çар ĕçне вĕренмелли занятисене ирттерме шкулăн ятарласах уйăрнă кабинет пур. Унта çар ĕçне вĕренмелли пособисемпе материалсем пурте çителĕклĕ.

Тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма ачасем аван пĕлеççĕ. Шкулта пурĕ 226 ача вĕренет, вĕсенчен 142-шĕ ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене парса çитерне. Ыттисем те ПВХО нормине пама хатĕрленсе çитнĕ. Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма пĕлнипе пĕрлех, шкул ачисем тăшмана хирĕç пăшал тытса çапăçма та вĕренеççĕ. Отлично тата аван паллăсемпе кăна вĕренсе пыракансем: Ю. Кошкин (саккăрмĕш класран), Л. Шумилова (вуннăмĕш класран), А. Владельщиков (тăххăрмĕш класран) тата ыттисем те—пурĕ 13 ача—ЮВС значокĕн нормисене панă, значоксем илнĕ. Ачасем фронтри боецсем пулма пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ.

Учительсем ачасене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Шкул директорĕ Т. Я. Золотов юлташ географипе топографи предмечĕсене вĕрентет. Хăйĕн урокне вăл Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ăнлантарса панипе çыхăнтарать. Каласусене ачасем хавассăн итлемелле ирттерет. Математика вĕрентекен Э. В. Васин тата физика вĕрентекен А. Н. Голова юлташсем те хăйсен урокĕсене вăрçă ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса ирттереççĕ.

Учительсен коллективĕ фронта пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума учительсем виçшер кунхи ĕçукçине панă. Бронепоезд тума паянхи куна 480 тенкĕ укçа хывнă. Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене учительсен коллективĕ 975 тенкĕлĕх çыраннă. Вăл шутран Т. Золотов — 125 тенкĕлĕх, Т. Малинин — 120 тенкĕлĕх, М. Пушкина — 100 тенкĕлĕх çыраннă.

Учительсем ачасене çар ĕçне пикенсе вĕрентнипе пĕрлех хăйсем те ку тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Шкулта пурĕ 15 учитель ĕçлет. Вĕсем пурте ПВХО значокĕн иккĕмĕш ступеньлĕ нормисене парса, значоксем илнĕ. 4 учителĕн Ворошиловла тĕл перекенсен значокĕ пур.

Халĕ учительсем те, шкул ачисем те каникулта. Анчах каникула та вĕсем усăсăр ирттермеççĕ. Учительсем агитколлективсене хутшăнса ĕçлеççĕ, ачасем йĕлтĕрпе ярăнма вĕренеççĕ.

М. ЯСТРАН.

Машинистсен чаплă ĕçĕсем

КАНАШ. Хусан чугунçулĕн машинисчĕсем çĕнĕ çула ĕç тухăçлăхне хăпартнипе, техникăна юсавлă тытнипе тата çунтармалли япаласене перекетленипе кĕтсе илчĕç.

Декабрь уйăхĕн 20 кунĕ хушшинче Канаш станцин машинисчĕсем 152 йывăр туртакан поезда илсе çўренĕ. Вĕсем сахал мар çар хатĕрĕсемпе таварсене кирлĕ çĕре вăхăтра тата пĕр аварисĕр çитерсе панă. Вăрçă вăхăтĕнче кăтартуллă ĕçленĕшĕн Хусан чугунçулĕн управленийĕ нумаях пулмасть Канаш станцинчи 19 машиниста хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Норма тăрăх паровоза пĕрре юсанипе 4.500 километр каймалла. Лайăх ĕçлекен машинистсем çак нормăна чылай ирттереççĕ. Машинист-стахановец Тигелев паровоза пĕрре юсанипе 5.306 километр чупать. Çавăн чухлĕ чупсан та, унăн паровозĕ юсавлă шутланать, мĕншĕн тесен Тигелев юлташ техникăна юратать, машинăна лайăх тытать.

Паровоза инçе илсе çўрессипе Шматовпа Тирюкалов машинистсем уйрăмăнах малта пыраççĕ.

Канаш станцин деповĕ çунтармалли япаласене уйăхран уйăха нумайрах перекетлесе пырать. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче кăна 417.6 тонна çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварнă. Вăл шутран 244-мĕш номерлĕ маневровăй паровоз çинче ĕçлекен машинистсем Белоглазов, Суханов, Чикин юлташсем 33 тонна, таварнăй паровоз çинче ĕçлекен машинистсем Костроминпа Николаев—16 тонна, Захаровпа И. Тимофеев—25 тонна, Корнишкинпа Каляканов — 39 тонна перекетленĕ.

Çунтармалли япаласене тирпейлĕ тыткалас тĕлĕшпе 66-мĕш номерлĕ пассажирски паровоз çинче ĕçлекен Сагитовпа Игнатов машинистсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ октябрьпе ноябрь уйăхĕнче 167 тонна ытла çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварнă.

Çĕнĕ çул умĕнхи социализмлă ăмăртура чаплă машинистсем Назаровпа Ф. Тимофеев юлташсем уйрăмăнах лайăх ĕçлерĕç. Паровоз çинче темиçе талăк канмасăр çўресе, хăйсене хушнă васкавлă заданисене срокчен тата кăтартуллă пурнăçларĕç. Çав вăхăтрах 22 тонна ытла çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварчĕç. Лайăх ĕçленĕшĕн вĕсенчен Назаров юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине, Тимофеев юлташа Хусан чугунçулĕн Управленийĕн хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

— Пирĕн работниксем Сталинла железнодорожниксен хисеплĕ ятне яланах çўлте тытаççĕ,—тесе калать Канаш станцин депо начальникĕ Прокопьев юлташ.

Т. ИВАНОВ.

Кăтартуллă итогсем

ЙĔПРЕÇ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç, Совет халăхĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне сыхласа хăварассишĕн паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕмĕтпе ĕçлесе, районри промартельсем кăçал пысăк çитĕнўсем турĕç. Буинскри «1-ое Мая» промартель çулталăкри плана 4-мĕш кварталăн пуçламăшĕнчех пурнăçларĕ. «1-ое Мая» промартеле вăрçă пуçланиччен парти членĕ И. Моторин ертсе пынă. Моторин юлташа Хĕрлĕ Çара илсен, артеле ертсе пырас ĕçе паллă стахановкăна Мельникова юлташа шанса панă. Халиччен яланах малти вырăнта пулнă артелĕн чысне Мельникова юлташ пĕрре те чакармарĕ. Вăл артель членĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пычĕ, политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартрĕ. Çапла майпа артель çулталăк планне декабрĕн 25-мĕш тĕлне чылай ирттерсе тултарчĕ. Артель членĕсем, производствăра стахановла ĕçленипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çара ытти майсемпе пулăшас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Танксен соединенине тунă çĕре промартель 2624 тенкĕ укçа панă. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем, кĕпе-йĕмсем т. ыт. те чылай пухса панă.

Çавăн пекех инвалидсен Йĕпреçри «Помощь» промартелĕ те ĕçре паллă çитĕнўсем турĕ. Малта пыракан çĕвĕ çĕлекен цех (цех заведующийĕ Яковлева юлташ) çулталăк планне декабрĕн 1-мĕш тĕлнех тултарнă. Çĕвĕçсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, васкавлă заказ тăрăх кĕрĕк пиншаксем, ăшă жилетсем, мулаххайсем çĕлесе ноябрь уйăхĕнчи плана ытлашшипех пурнăçланă. Атă-пушмак çĕлекен цех та çулталăкри плана ноябрĕн юлашки кунĕсенчех тултарнă.

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене Мускав патĕнче паттăррăн çапса çĕмĕрнипе хавхаланса, артель членĕсем ĕç тухăçне татах та ытларах ўстерсе пыраççĕ. Юлашки вăхăтра артель йĕлтĕрсем тума васкавлă заказ илчĕ. Ку заказа пурнăçлама вĕсем уйрăм бригада организациленĕ. Бригада çак чыслă ĕçе большевикла пурнăçлама тытăнчĕ. Йĕлтĕрсем тумалли материала типĕтме уйрăм çурт турĕç.

Çĕршыв оборонине çирĕплетме — «Комсомол Чувашии» бронепоезда тунă çĕре артель членĕсем 2845 тенкĕ укçа пухса пачĕç, укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 1000 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

В. АНДРЕЕВ.

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА

Уйрăм çурта атакăласси тата ăна хўтĕлесси

Германи фашизмне хирĕç кĕрешнĕ чухне пирĕн боецсен час-часах халăх пурăнакан пунктсемшĕн çапăçма — вĕсене хўтĕлеме е вĕсенчен тăшмана çапса кăларма тивет.

Фашистсем урса кайсах пирĕн промышленность центрĕсем патне тапăнса кĕме, ăшă çуртсене кĕрсе вырнаçма тăрăшаççĕ. Анчах та Хĕрлĕ Çар чаçĕсем гитлеровецсене çине-çинех пырса çапаççĕ, çавăн пирки фашистла захватчиксен вырăс çĕршывĕнчи шартлама сивĕ хĕле нимĕн хўтлĕхсĕр уй-хиртех тўссе ирттерме тивет.

Халăх пурăнакан пунктра наступление урамсем тăрăх, карташсем, садсемпе пахчасем урлă туса пыраççĕ. Анчах час-часах çуртсенче, сарайсенче, подвалсенче, чердаксенче пытанса ларакан противник хирĕç тăрать. Апла пулсан, противника кашни уйрăм çуртран çапса кăларма тивет. Противника пур çуртсенчен те уçă вырăна, урама хĕссе кăларсан, ăна вара пĕтерсе тăкма е халăх пурăнакан çак пунктран хăваласа кăларма йывăр мар.

Противник йышăнса илнĕ тата атакăлама палăртнă çурта чи малтан ытти çуртсенчен уйăрмалла, урăхла каласан, блокировать тумалла. Ку ĕнтĕ, çурта çавăрса илмеллине, юнашар çуртсем çине пулеметсемпе автоматсенчен пиçĕ вăйлăн персе тăмаллине пĕлтерет, мĕншĕн тесен çав çуртсем çинчен противник наступлени тăвакансем çине персе тăма пултарать.

Уйрăм çурта атакăлама уйăрнă подразделение (взвода, ротăна) икĕ групăна уйăрмалла. Пĕр группи—мĕнпур подразделенин виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ—çурта атакăлать, тепĕр группи—подразделенин виççĕмĕш пайĕ—атака тăвакан группăна противник тылран е флангран пырса çапассинчен хўтĕлет.

Хўтĕлекен группа хăй ретĕнчен атакăлакан çуртпа юнашарти çуртсемпе урамсене сăнаса тăмашкăн наблюдательсем уйăрать тата тăшманăн контратакисене сирсе пăрахмашкăн е унăн юнашар çуртсем çине вырнаçтарнă огневой средствисене пĕтерсе тăкмашкăн хăйĕн хĕçпăшалне яланах хатĕр тытса тăрать.

Атака тăвакан группăна огневой тата ударнăй ушкăнсене уйăрмалла. Огневой ушкăн (пулеметсем, минометсем, орудисем), атакăлакан çуртăн алăкĕсемпе чўречисем çине персе тăрса, противник çуртăн подвалĕнчен, алăкĕсемпе чўречисенчен, чердакĕнчен персе тăрассине путлантарса лартать. Ударнăй ушкăн çурта çĕмĕрсе кĕрсе, противника çурт ăшĕнче пĕтерсе тăкать. Ку ушкăна ручной гранатăсемпе, штыклă винтовкăсемпе хĕçпăшаллантармалла. Атакăлакан çуртăн чўречисем çўлте пулсан, çак çуртăн пĕрремĕш хутне чўречерен кĕмешкĕн пусмасем е мĕнле те пулин урăхла подставкăсем пулмалла.

Автоматсенчен, пулеметсенчен, минометсенчен тата орудисенчен персе тăнă хушăра ударнăй ушкăн атакăлакан çурт патне сисĕнмесĕр пырать. Ушкăн малтанах палăртса хунă сигнал тăрăх огневой ушкăн пеме чарăнать те, ударнăй ушкăнри боецсем чўречесем çине гранатăсем ывăтса, вĕсем витĕр çурта çĕмĕрсе кĕреççĕ. Пусмасемпе усă курмалла пулсан, ударнăй ушкăн пусмасем лартса, вĕсем тăрăх чўрече шайне хăпарса çитсе гранатăсем ывăтма хатĕрлениччĕнех огневой ушкăн чўречесем çине персе тăрать. Кун пек чухне огневой ушкăнри боецсемпе командирсен, хăйсен юлташĕсене тивертес мар тесе, уйрăмах питĕ асăрханса тĕл пемелле.

Ударнăй ушкăнри боецсем, çурта çĕмĕрсе кĕрсен, противника штыкпа тата гранатăпа пĕтерсе тăкаççĕ, пўлĕм хыççăн пўлĕм, хут хыççăн хут йышăнса пыраççĕ.

Çурта ишĕлтермелле мар чухне е çурта ишĕлтермелли средствăсем (артиллери, взрыв тăвакан япаласем) çук пулсан, çурта çакăнта кăтартнă пек атакăласа йышăнса илеççĕ.

Уйрăм çурта вăйлăн хўтĕлемешкĕн çирĕп чулçурта суйласа илмелле. Çурта хўтĕлемелли гарнизона çуртăн пысăкĕшне кура (çурт миçе хутлине тата кашни хутĕнче миçешер пўлĕм пулнине кура) уйăрса хумалла.

Хўтĕлемелли çуртăн чўречисене тăпра е хăйăр тултарнă михсемпе питĕрмелле, икĕ енчен те хăмапа çапса хупласа лартмалла. Пăшал чиксе пемешкĕн пĕр-ик шăтăк-бойница хăвармалла. Чердаксенче бойницăсене мачча чўречисемпе усă курса тăваççĕ, пўрт тăррине шăтарса та уйрăм бойницăсем тăваççĕ. Боецсене пульăсемпе осколоксенчен хўтĕлес тесе, чердакра пĕренесенчен е тăпра тултарнă михĕсенчен хўтĕленмелли стенасем тăваççĕ. Çурта кĕмелли пур алăксене те баррикадăсем туса питĕрсе лартаççĕ.

Çурт патне пымалли вырăнсене персе тăмашкăн хăшпĕр ручной тата станковăй пулеметсене çурт тулашне—стена çинчи шăтăксемпе хўтлĕхсене, балконсем çине, юнашар çуртсем çине вырнаçтарса лартмалла. Çурт тулашĕнчи пулеметсене валли чакса çурт ăшне кĕмешкĕн çул хăвармалла. Юнашар çуртсем çине вырнаçтарнă огневой средствăсене вăрттăн, противник сисиччен, хăрушă мар çулпа чакма май килсен çеç хўтĕлекен çурт ăшне илсе кĕмелле. Кун пек тума май килмесен, юнашар çуртсем çине вырнаçтарнă огневой средствăсене урăх подразделенисем çумне пĕрлештереççĕ.

Хўтĕлемелли çурт тавра пехотăна тытса чармашкăн тĕрлĕ чăрмавсем, çав шутрах фугассемпе минăсем те, лартмалла.

Çурт ăшĕнче боецсене çуртăн аялти хутĕнчи пўлĕмсем тăрăх вырнаçтарса тухмалла. Хўтĕлекен çурт нумай хутлă пулсан тата çурта хўтĕлеме боецсем çителĕклĕ пулсан, боецсен пĕр пайне çўлерехри хутсене те вырнаçтарса тухма юрать. Пĕр-пĕр шалти пўлĕмре пўлĕмсенчи гарнизонсене вăйлатма тата çурта çĕмĕрсе кĕнĕ противника хирĕç контратака тума резерв тытса тăмалла. Пўлĕмсенче боецсен хисепĕ кашни бойница пуçне 2—3 çын тивмелле; çак боецсенчен пĕри персе тăрать, тепри винтовкăна авăрласа ăна перекен боеца парать, е пулеметсене валли дискемпе лентăсем хатĕрлет, виççĕмĕш боец (пĕр бойница патне виçĕ боец уйăрнă пулсан)—запасра тăрать.

Кашни пўлĕмрех боеприпассем, уйрăмах ручной гранатăсем, пушар-мĕн пулас пулсан сўнтерме шыв, хăйăр, аманнисене пулăшу пама медикаментсем çителĕклĕ пулмалла.

Противник çурта атакăлама хатĕрленнине сиссенех, мĕнпур гарнизон хăйĕн вырăнне йышăнать. Тăшманăн пухăнса тăнă ушкăнĕсене персе салатса яма тата унăн огневой точкисене путарса лартма тăрăшаççĕ. Противникăн атакăлакан пехотин çурт стенисем патне пыма май килсен, ун çине ручной гранатăсемпе йывăр япаласем: чулсем, тараса пуканĕсем, металл татăкĕсем т. ыт. те пăрахаççĕ. Атакăлакан противник чўречесем патне пусмасем лартассине пур майсемпе те чарса пымалла. Противникăн пусмасем тăрăх хăпарма тăрмашакан салтакĕсене персе, шалчасемпе тĕртсе ўкермелле, пусмисене тĕртсе ямалла. Çурт ăшне çĕмĕрсе кĕнĕ противника штыкпа тата сывăхран персе пĕтерсе тăкмалла.

Противник сана çуртăн аялти хутĕнчен хĕссе кăларчĕ пулсан, çўлти хута малтанах вырнаçнă боецсем персе тăнин хўттипе усă курса, çўлерехри хута куçмалла. Аялти хутри гарнизон пĕтĕмпех иккĕмĕш хута хăпармалли пусмасемпе алăксене баррикадăсем туса питĕрсе лартмалла.

Мĕн пулăшу пырса çитиччĕнех гарнизонăн çакăн пек хўтĕленмелле.

Пулăшу вăхăтра пырса çитеймесен, чи юлашки самантра хўтĕлекен çуртран тухса чакмашкăн, кантăра пусмасем хатĕрлемелле. Çуртран тухса чакасси ăнăçлă пултăр тесен, чакмалли çулсене, çўлти хутри чўречесемпе алăксем витĕр юнашар çуртсен тăррине каймалли çулсене малтанах хатĕрлесе хумалла. Кантăра пусмасем тăрăх анассине те тата каялла чакассине те пулеметсемпе автоматсенчен персе тăнипе хўтĕлесе пымалла.

Халăх пурăнакан пунктсенче çапăçма, уйрăм çурта атакăлама та хўтĕлеме фронтри кашни боецăн çеç мар, всевобуч боецĕсен те кашниннех пĕлмелле.

Полковник С. ГУРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

продовольстви тата нимĕçсен икĕ пехотнăй дивизи штабĕсен докуменчĕсене тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 3 самолет, 137 автомашина, 6 танк, 8 бронемашина, 5 оруди, инженернăй пурлăхсем тиенĕ 13 вагон, пĕрене-хăма тавраш тиенĕ 10 платформа тата ытти трофейăсем те нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн кавалеристсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.250 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, противникăнне 3 танк, 25 оруди тата 60 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен пирĕн часть противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăнне 2 оруди, 8 станковăй пулемет, 2 трактор-тягач, нумай автоматсем, винтовкăсем, боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Юханшыв урлă каçнă чухне пăр айне пирĕн трактор-тягач анса кайнă. Сержант Федоров юлташ, çанталăк сиввине пăхмасăрах, салтăннă та, шыва чăмса, путнă трактора хурçă канатпа çаклатса илнĕ. Шывран туха сан, Федоров юлташ боецсене тягача шывран туртса кăларма пулăшнă.

* * *

Итали çарĕн капитанĕ, хăй ирĕкĕпе тыткăна параннăскер, 1921 çултанпа фашистсен парти членĕнче тăнă Монголи Ренальдо çапла каланă: «Итали экспедиционнăй корпусĕ виçĕ дивизирен («Торино», «Пазубио», «Челере») тата чернорубашечниксен пĕр легионĕнчен тăрать. Юлашки вăхăтра «Торино» дивизирен салтаксем 3.000 çынна яхăн, «Пазубио» дивизирен — 2.600 çын çухалнă. «Челере» дивизинче çак хисепсенчен сахалах çухатман. «Челере» дивизин 2 кавалерийски полкне аркатса тăкнă та, халĕ ĕнтĕ вĕсем çапăçăва юрăхлă мар. Чернорубашечниксен легионĕ те чĕрĕ вăя питĕ нумай çухатрĕ. Ку легионри 1.500 салтакран 670 салтак вилсе тата аманса пĕтнĕ. 2-мĕш ротăна, разведка взводне, танксене хирĕç кĕрешекен взвода, хупăрласа илсе, пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. 250 салтак тыткăна парăннă. Чаçсенчи шухăш-кăмăлсем питĕ япăх, салтаксем пурте пекех, офицерсенчен те пĕр пайĕ вăрçă вĕçленсе хăвăртрах килĕсене таврăнма ĕмĕтленеççĕ. Вырăссен листовкисене салтаксем уççăнах вулаççĕ. Итали салтакĕсемпе нимĕç салтакĕсем хушшинче час-часах тавлашусемпе хирĕçÿсем пулса иртеççĕ. Оккупациленĕ районсенче мĕн пур пурлăха нимĕçсем хăйсем пухса илеççĕ, итальянецсем валли мĕскĕн ăпăр-тапăрсене çеç хăвараççĕ. Апатçимĕçе валеçесси час-часах нимĕç салтакĕсем хушшинче çапăçу пуçланса кайнипе вĕçленет».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Сычевка хулинче тыткăна лекнĕ çар çыннисене тытса усрамалли лагере вырăнти халăха—çуртсемпе урамсенче тытнă хĕрарăмсене, стариксене, ача-пăчасене — 5000 çынна хупса лартнă. Лагерьти çынсем кун каçах тулта уçă çĕрте тăраççĕ. Çуртра çавтери тăвăр пирки, вĕсен ура çинче тăрсах çĕр каçма тивет. Лагере хупнă кашни çынна талăкне 115-шер грамм шÿрпе параççĕ. Лагере хупса лартнă çынсене хаяррăн хĕнесе асаплантарнине, пере-пере пăрахнине кашни кунах курма пулать.

* * *

Арменири предприятисенчи нумайĕшĕсем çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕнче хăйсен заданийĕсене ытлашшипех тултарнă. Кафански пăхăр рудин комбинатĕнче руда тупас плана 150 процент, Аллавердски завод — 147 процент тултарнă.

ХĔРЛĔ ÇАР ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ИОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Америкăра тухса тăракан хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан хыпарсене халь те курăнмалла çĕре пичетлесе пыраççĕ-ха. Хаçат-журналсем совет хĕçпăшалĕн ăнăçлă ĕçĕсем çинчен савăнса çыраççĕ. «Нью-Иорк таймс» хаçатпа «Нью-Иорк геральд трибюн» хаçат çапла çыраççĕ: советсен ăнăçлă ĕçĕсем пирĕн Лăпкă океан çинчи ĕçсем ăнăççăр пулнине саплаççĕ, çапла вĕсем тĕнчери вăрçăн малашлăхне лайăхлатаççĕ,—теççĕ.

«Вырăс фронтĕнче, çапăçусен чи кăнтăрти фронтĕнче,—тесе çырать «Нью-Иорк таймс» хаçат,—Гитлер пысăк поражени тÿсрĕ. Нимĕçсем Российăра каялла чакса пынине Гитлер ĕнтĕ йĕркеллĕн çĕнĕ позицисем патне чакса пыни тесе калама пултараймасть. Нацистсем мĕнтери поражени тÿсни халь Хĕрлĕ Çар Крымра çĕнтернĕ хыççăн питĕ уçăмлă пулса тăчĕ. Вырăссен çарĕн Крымри ăнăçăвĕсем вĕсем сивĕ çанталăка пула мар (нимĕçсем çапла ăнлантарма хăтланаççĕ), Хĕрлĕ Çар тăрçă тĕлĕшĕнчен малта тăнипе пулни питĕ те паллă ĕнтĕ»,—тесе çырать хаçат.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат умстатья пичетлесе кăларнă; унта вăл, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ çинчен каласа, çапла çырать: çак çĕнтерÿ вырăс çарĕпе вырăс халăхĕн хастарлăхне тата дисциплинине тепĕр хут кăтартса пачĕ. Совет войскисем тĕмĕн тăршшĕ фронтăн чылай кирлĕ участокĕсенче ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ, Германи çарĕ, нумайĕшне никам çĕнтерейми çар пек курăннăскер, чакнăçемĕн чакса пырать. Тимлĕн хирĕç тăрса çапăçассин, хăйĕн вăйĕсене çĕнĕрен пухса çирĕплетессин примерĕсене, Хĕрлĕ Çар кăтартса панисенчен лайăхраххисене историре урăх тупма çук.

Вырăс халăхĕ хăйĕн салтакĕсене тивĕçлĕ пулса тăчĕ. Фронтра ĕçсем вăхăтлăха ăнăçсăр пулса пынă вăхăтра та вырăссен тылĕнче паника пулман, нимĕçсем тытса илнĕ совет районĕсенче те халăх оккупантсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пырать.

«Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ нимĕçсем чикĕнчен çапла çырать: совет войскисем Керчь хулине илни Гитлерăн Кавказ çине пырса тапăнас планне аркатса ячĕ,—тет.

«Гитлер трагедийĕн пĕр пайĕ вăл,—тесе калать корреспондент,—халь горючи ресурсĕсене турттарса пырасси пулать, çав ресурссем хăвăрт чакса пынимĕçсен верховнăй командованине питĕ хытă пăшăрхантарать».

СТАМБУЛ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС) Турци хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен çакăн пек ятлă статьясем пичетлесе кăларнă: «Совет войскисен пысăк ăнăçăвĕсем», «Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕ», «Керчьпе Феодосие нимĕç оккупанчĕсенчен туртса илсе ирĕке кăларни». «Артен» хаçат вăрçă мĕнле пыни çинчен ятарласа çырнă статьяра çапла калать: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче совет войскисем нимĕçсене çаплах малалла хĕссе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар, хĕле пăхмасăрах, пуçарулăха хăйĕн аллинче çаварса илчĕ те наступлени тума тытăнчĕ. Çак юлашки кунсенче вăл Крымри фронтра пысăк çитĕнÿсем турĕ. «Юлашки кунсенче пулса иртнĕ событисенчен чи пахи вăл,—тесе çырать хаçат,—Хĕрлĕ Çар Керчьпе Феодосире ăнăçлă операцисем туни пулса тăрать. çаксем вĕсем пĕтĕм Крыма тасатассишĕн пыракан çапăçусем».

Ялчин «Ени сабах» хаçатра Керчьпе Феодосие нимĕçсенчен туртса илни нимĕçсене хытă пăшăрхантарни çинчен çырать. Çак операцие Хĕрлĕ Çар советсен Хура тинĕс çинчи флочĕпе пĕрле, нимĕçсем тахçанах ĕнтĕ пĕтерсе тăкнă тесе пĕлтернĕскерпе пĕрле, туса ирттернĕ, тесе кăтартать Ялчин.

ТЕГЕРАН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Иран» хаçат совет войскисем наступлени туни çинчен тата нимĕçсен «çиçĕмле вăрçă» планĕсем арканса кайни çинчен пысăк статья пичетлесе кăларнă. Хаçат çапла çырать: нимĕçсем совет территорине шалтан шалалла кĕрсе пынăçемĕн Хĕрлĕ Çар хирĕç тăрса çапăçасси хаярланнăçемĕн хаярланса пынă. Совет войскисем хăйсен çирĕплĕхĕпе, хастарлăхĕпе тата паттăрлăхĕпе пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕç. Ростова туртса илнĕ хыççăн Хĕрлĕ Çар фронтăн ытти участокĕсенче те çĕнтерÿллĕ наступлени пуçласа ячĕ. Вырăссен миллионшар салтак пур, тата çавтери пысăк ресурссем пур. Вĕсен çарĕ кунран кун çирĕпленсе пырать. Нимĕçсем çапла калаççĕ: эпир хĕллехи меллĕрех рубежсем патне йĕркеллĕн чакса пыма тытăнтăмăр, теççĕ. Анчах та,—тесе çырать хаçат,—Хĕрлĕ Çар хăйĕн наступленине шартлама сивĕсем килсе çитичченех пуçласа янă вĕт. Нимĕçсем Хĕрлĕ Çар хирĕç тăнине сирсе яма пултарнă пулсан, вĕсемпĕн Мускаври, Ленинградри, Тулари тата Ростоври хĕллехи хваттерсене вырнаçса ларни авантарах пулнă пулĕччĕ-çке!—тесе çырать статьян авторĕ

Тĕнĕл держависен авиацийĕн çухатăвĕсем

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл держависем Хĕвеланăç Европăра тата Çывăх Хĕвелтухăçĕнче 1941 çул хушшинче 4.093 самолет çухатнă. Çав вăхăтрах Англин 2.189 самолечĕ пĕтнĕ. Вăрçă пуçланнăранпа вăрçăн çак икĕ театрĕнче тĕнĕл держависем пĕтĕмпе 8.935 самолет çухатнă. Англин 3961 самолет пĕтнĕ. Ку хисепе Германи авиацийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тунă çухатусем кĕмеççĕ.

Совет халăхне М. И. Калинин ячĕпе килнĕ салам

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн М. И. Калинин юлташăн ячĕпе çакăн пек телеграмма килнĕ:

«Канадăри вырăссемпе украинецсен тăван çĕршыва пулăшса тăракан пĕрлешĕвĕ пухнă вырăссемпе украинецсен митингĕ Хĕрлĕ Çар валли медикаментсем илме 9 пин доллар укçа уйăрса пама йышăнчĕ. Фашистсене хирĕç пыракан кĕрешÿре яланах тулли пулăшса тăма сăмах пачĕ митинг. Çĕнтерÿ сирĕн алăра пулассине эпир хытă шанса тăратпăр. Председатель КУНЦА».

Испанин республикăллă çарĕн боецĕсем Хĕрлĕ Çара саламлаççĕ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Испанин халĕ Англи çарĕнче тăракан республикăллă çарĕнчи боецсем çыру ярса панă. Çак çырура вĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара саламлаççĕ. «Испанире эпир фашизма хирĕç этемлĕх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешрĕмĕр,—тенĕ çырура,—халĕ Англире те, Испанире çапăçнă пекех, хавхалануллăн малалла çапăçма хатĕр тăратпăр. Çакă питех те анлă кĕрешÿре эпир хамăрăн шухăш-кăмăл пĕрлĕхне нихăçанхинчен те ытларах çирĕплетсе пыратпăр. Тĕнчери халăхсен ирĕклĕхĕ сирĕн çĕнтерÿрен килет. Малалла, ирĕклĕхĕн паттăр çарĕ!» Çыру çине 100 çын алă пуснă.

Нимĕçсен Бельгири оккупациллĕ войскисем хушшинчи пăлханусем

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Дэйли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: Лондонра илнĕ сведенисем тăрăх, нимĕçсен Бельгири оккупациллĕ войскисем хушшинче пăлханусем пулса иртнĕ. Совет Союзне хирĕç туса пыракан вăрçă çинчен тавлашса-çапăçса кайнă пирки, нимĕç салтакĕсенчен нумайĕшне арестленĕ. Кун пек тĕслĕхсем нимĕçсен оккупациллĕ çарĕсен Брюссельри штабĕнче те пулса иртнĕ. Кунта йĕрке тума полицие чĕнсе илме тивнĕ. Брюссельри казармăсенче германецсен ротине пĕтĕмпех арестленĕ. Льежри пĕр çуртра нимĕç офицерĕпе летчикĕ пĕр-пĕринпе çапăçса кайнă. Нимĕç офицерĕ зала пырса кĕрсен, аллине çĕклесе фашистла саламланă, ăна хирĕç: «Вĕлерекен Гитлер тĕп пултăр»! тесе таврăннă та офицера хăлха чикки ынчен тыттарса янă. Вара çапăçура офицера йывăр амантнă, летчикне тытса арестленĕ.

Германири радио хуйха ÿкнĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Январĕн 3-мĕшĕнче Германири радио каллех ÿпкелешсе илнĕ. Вăл Гитлер çарĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче питех те пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулнă пирки хуйха ÿкнĕ. Хăйĕн пĕлтерĕвĕнче вăл çапла каланă: «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕç салтакĕсен положенийĕ питĕ йывăр. Вĕсен шартлама сивĕре те, юрлă çил-тăмансенче те, питĕ касакан сивĕсенче те çапăçма тивет»,—тенĕ. Анчах та çакăн пек пĕр хутчен кăна мар ÿпкелешнипе пĕрлех, Берлинри радио хăйĕн пĕлтерĕвĕнче ирĕксĕрех йышăнса çапла каланă: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи çарĕсем йывăр поражениСем тÿснин тĕп сăлтавĕ вăл вырăс сивисем мар, Хĕрлĕ Çарăн хăватлă атакисем пулса тăраççĕ, тенĕ. «Çанталăк условийĕсем,—тесе пĕлтернĕ çак радио,—вырăссем пирĕн позицисем çине пульăсем тăкнипе тан лаштарсан, пустуй япала кăна пулса тăрать. Чи хăрушши—вырăс пульăсем шăхăрма тытăнсан, пулеметсем шаккама тата йывăр орудисем кĕрлеме тытăнсан пырса çапать». Малалла радион çав пĕлтерĕвĕнчех çапла каланă: «Совет çарĕсен вĕçĕ-хĕррисĕр атакисем пирки нимĕç салтакĕсене мĕнтери йывăр асапсем тÿсме тивнине эпир кунта тылра лайăххăн пĕлме те пултараймастпăр»,—тенĕ.

Данцигри хаçат нимĕçсен вăхăтлăха йышăнса илнĕ совет районĕсенчи лару-тăру çинчен

СТОКГОЛЬМ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Данцигер форпостен» хаçат Германи войскисем вăхăтлăха йышăнса илнĕ совет районĕсенчи лару-тăру çинчен каласа панă май, халăх Германи влаçĕсене вăйлăн хирĕç тăрать, тесе пăшăрханать. «Вырăссем, — тет малалла хаçат, — колхозсемпе совхозсенчен мĕнпур лашасемпе машинăсене илсе тухса кайнă». Фашистсен хаçачĕ уççăнах: юлнă халăха ĕçлеттерес шутпа нимĕçсем тискер мелсемпе усă кураççĕ, тесе каласа парать. Анчах апла пулсан та вĕсен ку районсенчи экономикăллă пурнăçа йĕркене кĕртме май килмест.

Нимĕçсен захватчикĕсем помещиксен стройне каялла таваççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче помещиксен стройне каялла таваççĕ. Германин оккупациллĕ влаçĕсен органĕ пĕлтернĕ тăрăх, нацистсем çĕнĕ распоряжени кăларнă. Çав распоряжени тăрăх, ĕлĕкхи помещиксене е вĕсен тăванĕсене национализациленчен хăйсен харпăрлăхĕ пулнă çуртсене тытса тăма тата çĕр участокĕсемпе усă курма ирĕк параççĕ. Помещиксене Германи войскисен хĕçпăшалĕсемпе хÿтĕлеме сăмах панă.

Парижри пурнăç

СТАМБУЛ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Тан» хаçат французсен столици пулнă хулари лару-тăру çинчен пысăк статья пичетлесе кăларнă. «Парижра, — тесе çырать хаçат, базарсемпе магазинсем мĕн иккенне манса пыраççĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен базарсене хупса пĕтернĕ, магазинсенче нимĕн те çук. Çавтери пĕчĕк нормăсемпе карточкăсем тăрăх памалли продуктсем те пулин çук. Хулари çынсем çăкăр илме пĕчĕк талонсем илеççĕ. Çав талонсенче çăкăра хăш числара пырса илмеллине кăтартса параççĕ. Анчах кăтартса панă кун çăкăр яланах пулмасть». Малалла хаçат çапла çырать: «Механизированнăй транспорт пачах çухалнă, автомашинăсем вырăнне извозчиксем ĕçлеççĕ. Урамсенче иртнĕ ĕмĕрти урапасем — фиакрсемпе кабриолетсем çÿреме пуçланă. Таксисене çĕнĕ транспортпа «вело-таксипе» улăштарнă», — тет.

Ли заявленийĕ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Норвегин Лондонри правительствин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ли радио тăрăх сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл демократиллĕ çĕршывсен вăрçăри лару-тăрăвĕ çĕнĕ çулран пуçласа, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай лайăхланнине кăтартса панă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Вырăссем Гитлер войскисене хирĕç ĕмĕрне курман паттăрлăхпа çапăçаççĕ. Германи войскисене çĕнтерекен çук текен теорин суялăхне халĕ практикăра кăтартса панă, тенĕ Ли. Сурçĕрти çĕршывсем çинчен каланă май, министр çапла каланă: Финлянди пусмăрçă-нимĕçсемпе пĕрле Совет Союзĕн территорийĕ çине кĕрсе кайрĕ, çапла ĕнтĕ вăл Норвеги пусмăрлакан союзникĕ пулса тăчĕ. Çавăн пирки те ĕнтĕ Норвеги правительстви Финляндипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахрĕ.

Ли хăйĕн сăмахĕн вĕçĕнче Норвеги халăхĕ тунă çухатусем усăсăр пĕтменнине, çитес çывăх вăхăтсенчех Норвеги халăхĕ çĕнтерессине питĕ хытă шанса тăни çинчен каланă.

Чехословаки министрĕ словаксене чĕнсе калани

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Чехословаки министрĕ словаксене чĕнсе, Лондонра радио тăрăх сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Фронтри салтаксем, словаксемпĕн ют тата тăшманла интерессемпĕн çапăçма пăрахăр, хамăрăн вырăс тăвансемпе пĕрлешĕр, вĕсемпе пĕрле тăрса хăвăрăн хĕçпăшалăрсене нимĕçсене хирĕç, тăванпа тăвана вĕлерттерекенсене хирĕç, çĕклĕр», —тенĕ.

Англи самолечĕсем Неаполь çине бомбăсем пăрахнă

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Каирта кăларнă черетлĕ коммюникере январĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Неаполь хули çине бомбăсем пăрахни çинчен пĕлтернĕ. Бомбăсем чугунçул станцине авиаци завочĕ çине тĕл лекнине паллă тунă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче çапла кăтартса панă: Америкăпа Филиппин войскисем Манилăн çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç енче Япони войскисене питĕ хаярран хирĕç тăраççĕ. Японецсем Америкăпа Филиппин войскисен позицийĕсене вăйлăнрах та вăйлăнрах атакăлаççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Англи командованийĕ Сингапурта паян кăларнă коммюникере çапла каланă: Керакра Япони войскисем ытларах та ытларах хĕссе пыраççĕ. Çĕр каçиччен Англи войскисем, кăнтăр еннелле чакса, çĕнĕ позицисем йышăннă. Вĕсем японецсене хаярран хирĕç тăраççĕ. Шутланă тăрăх, противник пысăк çухатусем тÿснĕ пулмалла. Керак юханшывĕн районĕнче японецсем хăйсен ĕçĕсене ытлашши активлăнах туса пымаççĕ.

Япони войскисем Борнеон çыранне анса юлнă.

Январĕн 3-мĕшĕнче çĕрле Англи авиацийĕ Малайăн хĕвеланăç çыранĕн таврашĕнче противникăн пароходĕ çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Тĕттĕм пулнă пирки операци результачĕсем çинчен каласа пама çук-ха.

Япони самолечĕсем Малайя çине темиçе хутчен те вĕçсе пырса тапăннă, анчах пысăк сиенсемех кÿмен. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Японецсен пĕр самолечĕ, Англин зенитнăй артиллерийĕ персе сиенленĕскер, хăйĕн базине вĕçсе таврăнайман пулĕ тесе шутлаççĕ. Ĕнер Японин пĕр самолечĕ Калангор патĕнче джунгли çине ÿксе çĕмĕрĕлнĕ.

Ĕнер Англипе Америкăн Бирма территорийĕ çинче кĕрешекен самолечĕсем противникăн Таири аэродромĕсене атакăланă. Самолетсем пурте хăйсен базисене вĕçсе таврăннă. Противникăн аэродромĕ çинче 4 самолета пĕтерсе тăкнă, сывлăшри çапăçусенче 2 самолета персе антарнă.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Австрали командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Австрали авиацийĕ Японин Австрали утравĕсенчен пĕрин çинчи бази çине вĕçсе кайса тапăннă. Пур бомбăсем те тĕл тивсе складсемпе сооруженисене çĕмĕрсе пăрахнă. Противникăн пĕр самолетне персе антарнă. Австрали самолечĕсем пурте хăйсен базисене таврăннă. Японин инçете вĕçекен бомбардировщикĕсем Бисмарк архипелагĕ тĕлĕнче разведка туса вĕçсе çÿренĕ тата Австрали аэродромне атакăланă. Темиçе бомба тĕл тивни аэродромра хăшпĕр сиенсем тунă. Вилнисемпе аманнисем те пур.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС) Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: тĕрĕслесе палăртнă даннăйсем тăрăх, Бардие йышăннă чух тыткăна 7.000 çын лекнĕ, вăл шутра 1.000 нимĕç. Районра противникран тасатас операцисем халĕ те пыраççĕ.

Аджедаби районĕнче Англи артиллерийĕпе авиацийĕ активлăн ĕçлеççĕ. Англин мобильнăй колоннисем противника анлă фронт тăршшипех пыра-пыра çапаççĕ. Икĕ тытăçура тăшманăн виçĕ танкне пĕтерсе тăкнă, икĕ танкне тата темиçе грузовикне сиенленĕ. Чылай тыткăна илнĕ.

Черчилль Британин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çарне саламлани

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Черчилль Британин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çарне салам янă. Çав саламра вăл Британи çарĕ Египета, Суданпа Хĕвелтухăç Африкăна хÿтĕлессишĕн пынă çапăçура тунă паттăрла ĕçсене паллă тăвать. Çав çарăн чăн юлашки пысăк çитĕнĕвĕ вăл Киренаикăра тунă чаплă çĕнтерÿ пулса тăрать, çав çĕнтерÿ мĕнле вырăн йышăнса тăни кунран-кун ытларах палăрса пырать,—тенĕ асăннă саламра. Çавăнта 250.000 çынна ытла тыткăна илнĕ. Çакă паха çитĕнÿшĕн Англи халăхĕ тавтăвать. Анчах та ĕçе халĕ вĕçлемен-ха, умра татах та аслăрах кунсем тăраççĕ.

Çав саламрах Черчилль Англин Вăтаçĕр тинĕсри тинĕс-çар вăйĕсемпе сывлăш-çар вăйĕсен çитĕнĕвĕсене те паллă тăвать. Вĕсем противника хирĕç кĕрешсе чылай çĕнтерÿсем тунă, противника çар материлĕсем куçарса пыма ăнăçлăн чăрмантарса, чарса тăнă.

Румыни халăхĕнчен ăшă тумтир туртса илни

НЬЮ-ИОРК, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак вăхăтра Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăра юлашки 20 çул хушшинче пулман сивĕ хĕл тăрать. Бухарест урамĕсенче çар патрулĕсем арçынсем çийĕнчен те, хĕрарăмсем çийĕнчен те тиртен çĕленĕ пальтосене тата ытти ăшă тумтирсене те фронта яма тесе ирĕксĕрех хыва-хыва илеççĕ. Каланă тăрăх, Балкан çинчи нумай хуласене тăм илсе шăнса пăсалнă нимĕç салтакĕсен партийĕсем çаплах килсе тăраççĕ.

Республикăри оргкомитетра

1942 çулти январĕн 3-мĕшĕнче кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен оргкомитетăн ларăвĕ пулса иртрĕ. Унта профсоюз обкомĕсен председателĕсемпе ДСО руководителĕсем пулчĕç. Оргкомитет профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кросне хатĕрлесе ĕç мĕнле пыни çинчен ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Е. Стешова, физкультурăпа спортăн хула комитечĕн председателĕ Филичкина, финанспа банк работникĕсен Союзĕн обком председателĕ Калиновская юлташсен доклачĕсене итлерĕ.

Оргкомитет кроса хатĕрленес ĕç хуларан начар пынине палăртрĕ. Хулари оргкомитет, ВЛКСМ хула комитечĕ, физкультурăпа спортăн хулари комитечĕ, çавăн пекех финанспа банк работникĕсен Союзĕн обкомĕ те кроса хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе тытăнман. Кроса хатĕрленес ытăва комсомолăн пуçламĕш тата профсоюз организацисенче чылай çĕрте ку тарăнччен те сÿтсе- явман. Кроса хутшăнма тивĕçлĕ çынсене—хĕрарăмсене, арçынсене, çамрăксене подразделенисем тăрăх уйăрас ĕçе вĕçлесе çитермен. Йĕлтĕр базисенче выртакан йĕлтĕрсемпе кирлĕ таран усă курмаççĕ. Комсомол тата профсоюз организацийĕсем хушшинче кроса хатĕрленес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва чĕртсе яман. Кроса хутшăнма тивĕçлĕ çынсене медицина енĕпе пăхса тухасси начар пырать.

Оргкомитет ВЛКСМ хула комитетне, физкультурăпа спортăн хула комитетне, финанспа банк работникĕсен Союзĕн обкомне çав çитменлĕхсене çак кунсенчех пĕтерме хушрĕ. Кросăн участникĕсене подразделенисем тăрăх уйăрассине январĕн 10-мĕш тĕлне туса çитерме, унтан тренировкăсем ирттерме тытăнма, комсомол, профсоюз организацийĕсем тата физкультура коллективĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушрĕ. Кросс участникĕсене медицина енĕпе пăхса тухассине организованно ирттĕр тесен, медпунктсем организацилемелле.

Оргкомитет профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кросне лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе Мари АСС Республикине социализмлă ăмăртăва чĕнес тесе йышăнса хăварчĕ. Социализмлă ăмăрту договорĕ тăрăх, республикăри комсомолецсен, профсоюз членĕсен, всевобуч подразделенийĕсенчи боецсен 100 проценчĕпех кроса хутшăнмалла. Кросра пулнисенчен 90 процентĕнчен кая мар ГТО значокĕн нормисене пама тивĕçлĕ. Кашни предприятире, учреждени, колхоз тата шкул çумĕнчех йĕлтĕрсен бази пулмалла, вĕсене яланлăхах çирĕплетсе хăвармалла.

Республикăри оргкомитет районсенчи тата хулари оргкомитетсене кроса лайăх хатĕрленес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме сĕнчĕ.

Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ

Канашри педучилище коллективĕ «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 678 тенкĕ укçан, 545 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. Педучилище директорĕ Семенов юлташ 100 тенкĕ, Тельцов юлташ 30 тенкĕ укçан, 300 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, тата ытти юлташсем те бронепоезд тума укçапа заем облигацийĕсем хывреç.

Коллектив укçа-тенкĕпе ппала лотерейин билечĕсене те пысăк активлăхпа çыранса илчĕ. Шкул директорĕ Семенов юлташ лотерея билечĕсене 210 тенкĕлĕх çыранчĕ. Ăна курса ытти преподавательсем те лотерея билечĕсене пĕр-пĕринпе ăмăртса çыранса илчĕç. Педучилище коллективĕ, лотерея билечĕсене пурĕ 3389 тенкĕлĕх çыранса, 2328 тенкине тÿлесе татрĕ. Вăл шутран вĕренекенсем, 1040 тенкĕлĕх çыранса, укçине 915 тенкĕ тÿлерĕç.

Кунсăр пуçне педучилище коллективĕ тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ çул ячĕпе парнесем туянма 375 тенкĕ укçа пухрĕ. Пухнă укçапа 15 килограмм сухари, махорка тата ытти япаласем те илсе ячĕ.

Е. РОМАНОВА.

Оборона фончĕ ÿсет

СЕНТЕРВАРРИ. Районри ĕçсыннисем 1941 çулти декабрĕн 27-мĕш тĕлне çĕршывăн оборона фондне 196.900 тенкĕ укçа, 110.370 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă.

П. МИКИШ.

* * *

КУКЕÇ. Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн пулăшса пыраççĕ. Вĕсем оборона фондне татах 50 центнер тырă, 8 килограмм çу, 100 çăмарта пама йышăнчĕç. Çавăн пекех Сарабайкассинчи «Урожай» колхоз членĕсем те оборона фондне 65 центнер тĕштырă, 10 центнер çĕрулми парма пулчĕç.

И. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Октябрь» колхозăн членĕсем Хĕрлĕ Çар кунран кун пысăк çĕнтерÿсем туса пынипе хавхаланса, оборона фондне кашни 32-шер килограмм çĕрулми пачĕç. Колхозник Д. Косойкин 80 килограмм пачĕ. Çапла вара колхозниксем оборона фондне татах 2 пин килограмм çĕрулми хывреç.

А. К.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 8—88, çырусемпе рабсельюорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 611. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 58 п. л.